ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛĔШĔР!

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН ТАТА ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

1952 çул Февраль 26 ЫТЛАРИКУН № 41 (8693) Хакĕ 20 пус. 34-мĕш çул тухать.

ПАЯНХИ НОМЕРТЕ:

Совет Союзĕ тăрăх (1 стр.).
Шăмăршă МТС-ĕ тракторсем юсамалли плана тултарнă (1 стр.).
Вăрман хатĕрлемелли плана тултармалли уйăхлăх (1 стр.).
Хамăр республика тăрăх (1 стр.).
КОЛХОЗ ПРЕДСЕДАТЕЛĔСЕН РЕСПУБЛИКĂРИ КАНАШЛĂВĔ. Чăваш АССР ялхуçалăхне малалла аталантармалли задачăсем çинчен. Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн председателĕ И. А. Афанасьев юлташ тунă докладран (2—3 стр.).
П. Федунов.—Французсен аслă писателĕ. Виктор Гюго çуралнăранпа 150 çул çитнĕ май (3 стр.).
Тĕнчери халăхсем Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 34 çул тултарнине уявлаççĕ (4 стр.).
Корейăри ĕçсем (4 стр.).
Америка çарĕсем Корейăра бактериллĕ хĕçпăшалпа усă курни çинчен Синьхуа агентстви пĕлтерни (4 стр.).
Германири социалистсен пĕрлĕхлĕ партийĕн Центральнăй Комитечĕн VIII-мĕш пленумĕ (4 стр.).
Англипе Китай туслăхĕ обществин Лондонри уйрăмĕн конференцийĕнче (4 стр.).

Виçĕ республика ăмăртăвĕнче мала тухассишĕн

Республикăри колхоз председателĕсен канашлăвĕ иртнĕ ялхуçалăх çулĕн итогĕсене пăхса тухрĕ.

Аслă çулпуçăмăр Сталин юлташ патне çырнă çырура йышăннă социализмла обязательствăсене пурнăçласа, республикăри колхозсемпе машина-трактор станцийĕсем 1951 çулта ытти çулхисенчен чылай ытларах тырпул туса илчĕç. Тырпула пухса кĕртес ĕçе вăхăтра та йĕркеллĕ ирттернĕ, государствăна тырă памалли плана палăртнă срокран икĕ уйăх маларах тултарнă. Çăм, утă, йĕтĕн вăрри, кантăр, кок-сагыз тата нумай çул ӳсекен курăк вăрри хатĕрлемелли плансене те республика срокчен тултарчĕ.

Колхозсем колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх тырпул, пахча çимĕçсем тата укçа-тенкĕ ытти çулхисенчен нумай ытларах валеççе пачĕç. Кашни ĕçкунĕ çине 3—4-шар килограмм тырă тата нумай пахча çимĕçпе укçа-тенкĕ панă колхозсем республикăра халĕ ĕнтĕ вуншарăн шутланаççĕ. Çакă вăл пирĕн колхозниксен экономикăллă пурнăçĕ çулсерен çĕкленсе пынине кăтартса парать.

1951 çулта республикăри нумай колхозсем пысăк тухăçлă тырпул çитĕнтерчĕç. Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан паллă колхоз вăтам шутпа кашни гектартан 23-шер центнер ыраш, 40 центнера яхăн çурхи тулă туса илнĕ. Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕ кашни гектартан 24 центнер çурă ыраш, 25 центнер çурă кĕрхи тулă, 21 центнер çурхи тулă, Чкаловски районĕнчи «Гвардеец» колхоз кашни гектартан 22-шер центнер ытла ыраш туса илнĕ. Вăтамран гектар пуçне 15—20 центнер таран тырпул пухса илнĕ колхозсем халĕ республикăра çĕршерĕн шутланаççĕ.

Уйрăм бригадăсем татах та пысăкрах çитĕнӳсем тунă. Вăрмар районĕнчи «Дружба» колхозри М. Филиппова бригади 18 гектар çинчен кашни гектар пуçне 33-шер центнер ыраш, Çĕрпӳ районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозри Л. Тихонова бригади 36 гектар çинчен кашни гектартан 32,6 центнер ыраш пухса илнĕ. Вăйлă тырпул çитĕнтерекен çакăн пек бригадăсен хисепĕ пысăк.

Обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе те республикăри колхозсем хăшпĕр ӳсĕмсем турĕç. Выльăхсен хисепĕ çулталăк хушшинче вуншар процент таран ӳсрĕ. Хальхи вăхăтра нумай колхозсенче выльăх-чĕрлĕх йышĕ виçĕ çуллăх план тăрăх пăхнинчен чылай ытларах. Вĕсен хисепне татах та ӳстерсе пыма пирĕн условисем çителĕклĕ пуррине малта пыракансен опычĕ лайăх кăтартса парать.

Выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ӳстерес енĕпе малта пыракан колхозниксем лайăх тĕслĕхсем кăтартса пâраççĕ. Улатăр районĕнчи «Путь Ильича» артельри доярка Л. Храмова хăйне çирĕплетсе панă 10 ĕнерен кашнинчен 2.142-шер литр сĕт суса илнĕ. Çав районти «Победа» колхозри свинарка А. Данилушкина хăйне çирĕплетсе панă 9 сысна аминчен кашнинчен 23-шер çура илнĕ. Етĕрне районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхозри сурăх фермипче (заведующийĕ Н. Крынецкий) 290 сурăхран кашнинчен вăтам шутпа 4,3-шер килограмм çăм касса илнĕ тата кашни 100 сурăхран вăтам шутпа 126 путек илсе пăхса çитĕнтернĕ. Йĕпреç районĕнчи Крупская ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕнче кашни вĕллерен 74-шар килограмм пыл, 1.200 грамм ăвăс илнĕ.

Паллах, республикăри колхозсем иртнĕ ялхуçалăх çулĕнче тунă ӳсĕмсем вĕсем çителĕклĕ мар, вĕсем пире лăплантарма пултараймаççĕ. Пирĕнпе ăмăртса ĕçлекен Мордва тата Мари республикисемпе танлаштарсан, эпир чылай енĕпе юлса пыратпăр-ха. Сăмахран, Мордва республикинчĕ кашни ĕнерен 5-шер пин литр сĕт суса илекен дояркăсем сахал мар. Мордва республикинчи мĕнпур машина-трактор станцийĕсем вăтамран кашни условнăй трактор пуçне 501 гектар сухаланă пулсан, пирĕн МТС-сенче чылайăшĕнче çавăн чухлĕ ĕçлеймеççĕ-ха. Обществăллă хуçалăха пур енчен те хăвăрт аталантармалли шалти резервсемпе эпир тулли усă кураймастпăр. Ĕç вăйĕпе çителĕксĕр усă куракан колхозсем пирĕн нумай, вĕсенче ĕç дисциплини çирĕп мар. Çĕрĕç культурипе выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçĕн культурине пирĕн чылай çӳле çĕклемелле. Республикăри колхозсен ĕçĕнчи чи пысăк çитменлĕхсенчен пĕри вăл — малта пыракан колхозсемпе МТС-сен опытне çителĕксĕр сарни тата ĕçе начар кĕртни пулса тăрать. Ялхуçалăх ĕçĕсене, уйрăмах выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçсене механизацилес енĕпе пирĕн нумай ĕçлемелле.

Ялхуçалăх енĕпе тăракан тĕп задачăна, тырпул тухăçлăхне ӳстерсе пырас тата выльăх-чĕрлĕх хисепне йышлатнипе пĕрлех унăн тухăçлăхне те хăпартса пырас задачăна ăнăçлăн татса парассишĕн тăванла виçĕ республика хушшинче пыракан социализмлă ăмăртура мала тухма пирĕн колхозсен пӳр условисем те çителĕклĕ. Ăмăртура мала тухма пире, чи малтан, ĕç резервĕсемпе тулли усă курни тата МТС-сен механизмĕсене тухăçлăн ĕçлеттерни, ялхуçалăх производствин культурине ӳстерсе пыни кирлĕ. Çак задачăна пирĕн колхозсемпе МТС-сем тата ялхуçалăх работникĕсем ăнăçлăн татса пама пултараççĕ, татса пама тивĕçлĕ те.

Виçĕ республикăн социализмлă ăмăртăвне хутшăнса, пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем, МТС работникĕсем, ялхуçалăх специалисчĕсем пысăк обязательствăсем йышăнчĕç. Кăçал пирĕн вăтам шутпа гектар пуçне 100 пăтран кая мар пĕрчĕллĕ тырăсем туса илмелле. Нумай çул ӳсекен курăксем акнă çĕр лаптăкне нумай ӳстермелле, хирсене хӳтĕлемелли вăрмансем лартмалла, садсемпе пахчасен лаптăкне сармалла. Обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли кăçалхи плана пур выльăхсем енĕпе те кашни колхоз, кашни район ирттерсе тата срокчен тултармалла. Выльăхсен тухăçлăхне нумай ӳстермелле. Кашни колхозра выльăх апачĕн çирĕп никĕсне туса хумалла, выльăх-чĕрлĕх усрамалли çуртйĕрсене кирлĕ таран туса лартмалла. Колхозсен хушма хуçалăхĕсене вăйлатса пымалла. Механизмсемпе тухăçлăн ĕçлемелле, кашни трактор пуçне 500 гектартан кая мар сухаламалла.

Хамăр илнĕ обязательствăсене ăнăçлăн татса парасси пуринчен малтан çураки ĕçĕсене лайăх ирттернинчен килет. Çурхи ĕçсене мĕн чухлĕ хăвăртрах та йĕркеллĕрех туса ирттерĕпĕр, çавăн чухлĕ вăйлăрах тырпул туса илĕпĕр.

Анчах, тӳрех калас пулать, республикăри чылай колхозсенче çуракине хатĕрленес ĕç çителĕксĕр пулса пырать. Паллă ĕнтĕ, лайăх вăрлăхсăр пысăк тухăçлă тырпул туса илме çук. Вăрмар районĕнче вăрлăха çакна шута илмеççĕ, унта вăрлăх сортласа тасатса хатĕрлес ĕç, пирĕн хаçат ялкорĕсен бригади пĕлтернĕ тăрăх, питех те çителĕксĕр пулса пырать. Канаш районĕнчи колхозсенче вырăнти тата минераллă удобренисем пухса хиро кăларас ĕçе начар туса пыраççĕ. Республикăри колхозсемпе МТС-сенче тракторсене тата ытти ялхуçалăх машинисене юсасси уйрăмах юлса пырать.

Çурхи ака кунĕсем çывхарнăçемĕн çывхарса килеççĕ. Хатĕрленӳ ĕçĕнчи çак пысăк çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнас пулать. Çуракине хатĕрленес ĕçсем мĕнле пынине кашни колхозра тепĕр хут тĕплĕн пăхса тухмалла та, палăрнă кăлтăксене хăвăрт пĕтермелле. ВКП(б) райкомĕсен, райсовет исполкомĕсен, колхоз правленийĕсемпе колхозсенчи парторганизацисен халĕ çуракине тĕплĕн хатĕрленсе çитме колхозниксене мобилизацилес енĕпе мĕн кирлине йăлтах тăвас пулать.

Тăванла республикăсен социализмлă ăмăртăвĕнче пирĕн республикăри колхозсем мала тухма пултараççĕ, мала тухма тивĕçлĕ те.

Тракторсем юсамалли плана тултарнă

ШĂМĂРШĂ. (Телеграфпа). Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ кунĕ тĕлне, социализмлă обязательствăсене пурнăçласа, Шăмăршă МТС коллективĕ тракторсем юсамалли плана тултарчĕ.

МТС директорĕ ИВАНОВ.
Парторганизаци секретарĕ КОСМОВСКИЙ.
Рабочием КАЗАКОВ.

Кăнтăрти уй-хир ĕçĕсем

СТАВРОПОЛЬ, февралĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Крайри тĕштырă совхозĕсем кĕрхи тулă тата нумай çул ӳсекен курăксен вăччисене массăллăн апат параççĕ. Çак ĕçе вĕсем 9.700 гектар çĕр лаптăкĕ çинче туса ирттернĕ ĕнтĕ. Пур çĕрте те çакăн пекех кĕрхи çĕртме тунă вырăна акас умĕн культиваци тăваççĕ, ир акакан пучахлă культурăсене тата нумай çул ӳсекен курăксене тăпра писсе çитнĕ участоксене суйласа акаççĕ. Каменнобродски совхоз ир акакан тĕштырăсемпе нумай çул ӳсекен курăксене 900 гектар ытла акнă.

Тĕштырă акса хăвармалли мĕнпур çĕр лаптăкĕ çине акма питех те лайăх, сортлă вăрлăх хатĕрленĕ. Тĕштырă культурисене хĕреслĕ майпа акаççĕ, вăрлăхсене яровизацилеççĕ.

СОВЕТ СОЮЗĔ ТĂРĂХ

ССР Верховнăй Совечĕн сессийĕ умĕн

ЛЕНИНГРАД, февралĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Хулари предприятисен коллективĕсем СССР Верховнăй Совет сессийĕпе ячĕпе стахановла вахтăна тăрса ĕçлеççĕ.

«Красный треугольник» заводра В. С. Абатуров юлташ бригадинчи закройщиксен хаклă пуçарăвне анлă сарнă. Вăл бригада кашни ĕçе тума кирлĕ вăхăта кĕскетме сĕннĕ. Конвейерсен ĕçне урăхлатса, стахановецсем кашни кун планран ирттерсе 5 пин мăшăр резина атă-пушмак туса кăлараççĕ.

Çип арлакан «Красная нить» комбинатри стахановецсем питĕ лайăх çип ытларах туса кăларма тытăннă. П. Е. Сорокурова мастерăн смени задание 30—35 процент ирттерсе тултарать. Стахановкăсем пуçарнипе кашни участокрах пĕрер çынна ĕçрен пушатнă.

«Ленотделгражданстрой» трестри строительсем П. В. Сталин ячĕпе тăракан проспектри çурта шал енчен срокчен виçĕ эрне маларах туса пĕтерме обязательство илнĕ. Кунта пур рабочисем те куллен нормăна пĕрре çурă хутран кая мар ирттерсе тултараççĕ.

Хĕрлĕ çар çĕнтернĕ вырăнта памятник лартма никĕс хывнă

ПСКОВ, февралĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Черех шывĕн сылтăм çыранĕнче, Псковран 8 километрта, 34 çул каярах çамрăк Хĕрлĕ Çарăн регулярнăй чаçĕсем Петроград патне пыма çунакан нимĕç империалисчĕсене татăклăн отпор панă вырăнта, паян историллĕ событие асăнса памятник лартма никĕс хывнă ятпа митинг пулса иртнĕ. Псков хулинчи тата облаçри пиншер ĕççыннисем Хĕрлĕ Çар полкĕн пĕрремĕш командирĕ Черепанов юлташ сăмахне пысăк тимлĕхпе итленĕ.

Митингра çавăн пекех çав полкра рядовой пулнă—халĕ инженер-механик Костев юлташ тата историллĕ çапăçусене хутшăннă ытти çынсем те сăмах тухса каланă.

Митинг хыççăн памятник никĕсĕн пĕрремĕш чулне вырнаçтарса хунă.

Виктор Гюго çуралнăранпа 150 çул тултарнă ятпа научнăй сесси ирттереççĕ

Виктор Гюго çуралнăранпа 150 çул тултарнă ятпа февралĕн 24-мĕшĕнче пĕтĕм тĕнчери литературăн А. М. Горький ячĕпе тăракан институтĕнче научнăй сесси уçăлнă.

Сессие Илья Эренбург писатель уçнă.

Сессире Е. В. Тарле академик кĕске сăмах тухса каланă. «Виктор Гюго—французсен аслă писателĕ» темăпа филологи наукисен кандидачĕ В. Н. Николаев доклад тунă.

Докладчик Виктор Гюго пурнăçĕпе творчестви çинчен тĕплĕн каласа панă. Вăл французсен аслă писателĕ çырнă паллă произведенисем — «Отверженные», «93-й год», «Собор Парижской богоматери», «Последний день приговоренного к смерти», «История одного преступления» кĕнекисемпе «Возмездия» сăвăсен сборникĕ çинче ытларах чарăнса тăнă.

Виктор Гюго мĕн виличченех хăйĕн пĕтĕм вăй-хăвачĕпе реакцие хирĕç, халăхсен никама пăхăнманлăхĕшĕн, ирĕклĕхĕпе демократиллĕ прависене хӳтĕлессишĕн кĕрешнĕ. Гюго миршĕн тăрса, мире сыхласа хăварасси халăхсенчен хăйсенчен килнине яланах асăрхаттарнă. «Хальхи самантра,—тенĕ вăл,—вăрçăшăн тăракан кивĕ тĕнчепе миршĕн тăракан çĕнĕ тĕнче пĕр-пĕринпе тĕл пулса тытăçма хатĕрленеççĕ... Граждансем, мир çĕнтеретех!»

— Гюго творчестви этемлĕхе юратнипе çуралнă тата аталанса пынă,—тет юлашкинчен докладчик.—Эпир халăхсен ирĕклĕхне пусмăрлакансене унпа пĕрле тарăхса вĕсене кураймасăр тăратпăр. Гюго творчестви пирĕн кунсенче те пуянлать, вăл çырнă произведенисен вăйĕ нихçан та чакмасть.

Сессире «В. Гюго тата XIX-мĕш ĕмĕрти Францири революциллĕ юхăм» темăпа филологи наукисен докторĕ Ю. И. Данилин доклад тунă. (ТАСС).

Вăрман хатĕрлемелли плана тултармалли стахановла уйăхлăх

Февралĕн 15-мĕшĕ — Мартăн 15-мĕшĕ

«Чăвашвăрман» трест тата ĕççынни депутачĕсен район Совет исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсем тăратнă тăрăх 1951—1952 çулсенчи кĕрнуннепа хĕллехи вăхăтра вăрман хатĕрлемелли плана срокчен тата ирттерсе тултарнăшăн республикăри Хисеп хăми çине çак колхозсене кĕртнĕ:

28. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи **«Будь готов» колхоз** (председателĕ **С. Кустиков** юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ **М. Дерстуганов** юлташ). Колхоз йывăç касса хатĕрлемелли плана 102 процент, каснă йывăçа çул хĕррине илсе тухмалли плана 105 процент тултарнă.

29. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи **«За урожай» колхоз** (председателĕ **С. Потянов** юлташ). Колхоз йывăç касса хатĕрлемелли плана 100 процент, каснă йывăça çул хĕррине илсе тухмалли плана 108 процент тултарнă.

30. Канаш районĕнчи **Крупская ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ **К. Иванов** юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ **Е. Федоров** юлташ, вăрман хатĕрлекен бригадăн бригадирĕ **Н. Никитин** юлташ). Колхоз йывăç касса хатĕрлемелли плана 100,1 процент, турттарса кăлармалли плана 100,4 процент тултарнă.

31. Первомайски районĕнчи **Шверник ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ **Т. Тимофеева** юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ **Л. Путикова** юлташ). Колхоз йывăç касса хатĕрлемелли плана 100 процент, каснă йывăça çул хĕррине илсе тухмалли плана 103,4 процент, турттарса кăлармалли плана 100 процент тултарнă.

„Красный маяк“ колхоз мĕншĕн юлса пырать?

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Ишеккасси ял Советне кĕрекен «Красный маяк» колхоз вăрман хатĕрлевĕнче юлса пырать. Вăл йывăç касса хатĕрлемелли плана 39 процент, турттарса кăлармалли плана 10 процент çеç тултарнă. Тăван çĕршыв умĕнчи чи кирлĕ тивĕçлĕхе çакăн пек пурнăçласа пыни колхоз руководителĕсем ответлăха туйманнинчен килнĕ.

Колхоз председателĕ И. Ишмендеров юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ Гаврилов юлташ вăрманта пачах пулман, çынсене ĕçлеме кăларса янипех лăпланса ларнă. Вăрманта 4—5-шер кун ĕçлесенех колхозниксем килĕсене таврăнаççĕ.

Стахановла уйăхлăх пуçланнăранпа чылай вăхăт иртрĕ. Колхозран пурĕ те 6 лавпа çеç ĕçлеме тухса кайнă.

— Вăрманта ĕçлеме бригадăра пĕр çын та çук, тупаймарăм,—тет Лапаев бригадир. Çав вăхăтрах чылай вăйпитти çынсем ахаль çӳреççĕ.

Колхозри коммунистсемпе комсомолецсем вăрман хатĕрлев ĕçĕнче авангардлă вырăн йышăнмаççĕ, Тăван çĕршыва йывăç мĕн тери кирли çинчен колхозниксене ăнлантарса памаççĕ.

Плана уйăхлăх хушшинче тултарас тесен, колхозран вăрмана çынсем тата лавсем хушса ямалла. Кунта колхоз членĕсене уйăхлăха массăллăн хутшăнтарма май пур, ăнлантарулла ĕçе сарса яни тата колхоз руководителĕсен ответлăхне ӳстерни çеç кирлĕ.

В. ЧОБАЙКИН.

Хамăр республика тăрăх

Ĕçялкорсемпе стена хаçат редакторĕсен канашлăвĕ

ВĂРНАР. Кунта ĕçялкорсемпе стена хаçат редакторĕсен районти канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура пурĕ 60 çын ытла пулнă.

Канашлу икĕ ыйту: кăçалхи январĕн 27-мĕшĕнче «Правда» хаçатра тухнă «Районти хаçатсен шайне çӳлĕ пусăма» ятлă умстатьяна тата ялкорсемпе стена хаçачĕсен задачисем çинчен сӳтсе яврĕ. Вăл ыйтусем тăрăх районти хаçат редакторĕ Е. Волков юлташ тата ВКП(б) райкомĕн ялхуçалăх пайĕн заведующийĕ М. Алексеев юлташ докладсем туса пачĕç.

Прение канашлу участникĕсем 9 çын тухса каларĕç. Вăл шутра Хрущев ячĕпе тăракан колхозри «Коммунизм çулĕпе» стена хаçат редакторĕ П. Кошкин юлташ хăйсен стена хаçачĕн ĕçĕнчи опыт çинчен каласа пачĕ. Çак стена хаçачĕ уй-хир ĕçĕсем вăхăтĕнче кашни кун темиçе экземпляр тухса тăрать. Çавăн пекех «Большевик» колхозри чи вăтă ялкор И. Кораков юлташ тухса каларĕ.

Канашлу районти колхозсенче çуракине хатĕрленес ĕç мĕнле пынине тата обществăллă выльăх-чĕрлĕхе мĕнле хĕл каçарнине тĕрĕслес енĕпе ялкорсен массăллă рейдне ирттерме йышăнчĕ. Массăллă рейда ирттерме ялкорсен 20 бригадине тунă.

Симĕс сухан сутаççĕ

Чапаевски поселокри хушма хуçалăх çулсеренех пахча çимĕç продукчĕсем сутса пысăк тупăш илет. Хушма хуçалăхăн теплица пур. Кăçал унта симĕс сухан, хăяр, помидор тата ытти пахча çимĕçсем лартса ӳстереççĕ. Теплицăра ӳстернĕ симĕс сухана Шупашкарти магазинсенче, колхоз пасарĕнче тата столовăйсенче сутма тытăннă. Кĕске вăхăт хушшинчех хушма хуçалăх 500 килограмм ытла симĕс сухан сутнă.

Теплицăра ӳстернĕ хăяра çитес кунсенче Шупашкартн магазинсене сутма тытăнаççĕ.

Механизаторсем вăйлă тырпулшăн кĕрешеççĕ

ЕЛЧĔК. Машина-трактор станцинчи трактористсемпе комбайнерсем, механиксемпе машинистсем республикăра малта пыракан механизаторсен патриотла пуçарăвне ырласа йышăнаççĕ. Чĕнсе калание сӳтсе явнă май, МТС-ри механизаторсем вăйлă тырпул туса илес, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе малалла лайăхлатас, тракторсемпе, комбайнсемпе тата ытти машинăсемпе тухăçлăрах ĕçлес, сезонти тата сменари нормăсене ирттерсе тултарас тĕлĕшпе халичченхинчен пысăкрах обязательствăсем илеççĕ.

Социализмлă Ĕç Геройĕ В. Салкин юлташ ертсе пыракан бригадăпа социализмла ăмăртса ĕçлекен пĕрремĕш трактор бригадин бригадирĕ П. Катюков юлташ бригада ячĕпе çапла пĕлтерчĕ: эпир кашни 15 лаша вăйлĕ тракторпа 1.100 гектартан кая мар сухаланă чухлĕ ĕç тума пулатпăр.

Пĕрремĕш бригадăри механизаторсем Ленин ячĕпе тата Сталин ячĕпе тăракан колхозсенче вăтам шутпа кашни гектартан 20-шер центнер, çав шутран 600 гектар çинче 24-шар центнер тырпул пухса кĕртме пулчĕç. Çемçе суха çине куçарса шутласан, кашни гектар пуçне пĕрер килограмм горючи, юсав ĕçĕсенче пĕрер тенкĕрен кая мар укçа перекетлеме сăмах пачĕç. П. Катюков юлташ ертсе пыракан бригадăри механизаторсем çывăх кунсенче тракторсене юсаса пĕтереççĕ, ытти ялхуçалăх машинисене пĕтĕмпех çуракине хатĕрлесе çитернĕ.

В. Указов юлташ ертсе пыракан трактор бригадинче республикăра малта пыракан тракторист-механизаторсен патриотла пуçарăвне хутшăннă П. Ерусланов юлташ ĕçлет. Бригадирпа П. Ерусланов тракторист тракторсене, ытти ялхуçалăх машинисене юсас тĕлĕшпе лайăх ĕçлеççĕ. В. Указов юлташ бригади 600 гектар çинчен 20-шер центнертан кая мар тĕштырă туса илме сăмах парать.

В. Указов юлташ социализмла ăмăртса ĕçлеме Ф. Спиридонов юлташ ертсе пыракан трактор бригадине чĕнчĕ. Ф. Спиридонов бригадир чĕнĕве йышăнчĕ.

Ытти механизаторсем те вăйлă тырпул туса илес, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре пысăкрах ӳсĕмсем тăвас тĕлĕшпе мĕнпур вăя хурса кĕрешме пулаççĕ.

Бригадирсемпе механиксем тата агитаторсем МТС-ри механизаторсен ăмăртăвне вăйлатса пырас тĕлĕшпе тимлĕ тăрăшаççĕ.

(Хамăр корр.).

Стрелкăсене лайăх пăхса усраççĕ

Стрелкăсем пĕрмай таса тата юсавлă пулсан, стрелочник хăй тивĕçне чыслă пурнăçласа пырсан, тимлĕ ĕçлесен çеç машинист поездсене шанчăклă илсе çӳреме пултарать. Çаксене асра тытса, Канаш станцийĕнчи Варламовăпа Микенина стрелочницăсем стрелкăсене лайăх пăхса усрама, уйрăм çитменлĕхсене хăйсен вăйĕпе пĕтерме социализмлă обязательство илчĕç. Вĕсен патриотла пуçаруне ытти стрелочниксем ырларĕç, стрелкăсене пăхса тухма обществăллă смотр ирттерме йышăнчĕç.

Стрелкăсене пăхса тухма стахановец-стрелочниксенчен, вагон сцепщикĕсенчен, поезд составителĕсенчен, командирсенчен, обществăллă организацисен представителĕсенчен ятарласа комисси уйăрнă.

Стрелкăсене кам мĕнле пăхса усрани çинчен курăнмалли вырăна çырса пĕлтереççĕ, производствăллă канашлусенче сӳтсе яваççĕ. Обществăллă смотр пуçланнăранпа стрелкăсене пăхса усрасси нумай лайăхланчĕ.

К. БАРАМОТОВ.
Канаш станцийĕнчи партбюро секретарĕ.

Колхозри радиоузел калаçать

Колхозсене радиофикацилес ĕç çултан-çул сарăлса пырать. Комсомольски районĕнчи «Гигант» колхозри колхозниксем çак кунсенче хăйсен килĕсене радио кĕртрĕç. Январь уйăхĕнче колхозра радиоузел ĕçлеме тытăнчĕ.

Радио колхоз пурнăçĕнче пысăк вырăн йышăнса тăрать. Пуçламăш парторганизаци политикăллă-массăллă ĕçсене ирттернĕ чухне радиоузелпа анлă усă курать. Нумаях пулмасть радио тăрăх Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозăн ĕçри ӳсĕмĕсем çинчен, вĕсен ĕçĕнчи паха опытсем çинчен каласа пачĕç. Çакăн хыççăн колхозниксем çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе лайăхрах ĕçлеме тытăнчĕç. Ăна çак тĕслĕх те лайăх кăтартса парать. Халиччен уя тислĕк кăларас ĕç йĕркеллĕ пулса пыман. Халĕ ку тĕлĕшпе ĕçлеме ятарласа çынсем уйăрнă. Вĕсем вырăнти удобренисем хатĕрлеççĕ. Виççĕмĕш бригадăри Н. Голубев, А. Скворцов, И. Толландцев колхозниксем, сăмахран, куллен 30—35 лав тислĕк уя кăлараççĕ. Уя кăларнă тислĕке пысăк купа туса хураççĕ.

Çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе бригадăсем хушшинче социализмлă ăмăрту сарăлсах пырать. Ăмăртура халĕ 5-мĕш бригада мала тухнă. Малта пыракан бригадăсен ĕçĕсем çинчен радиопа пĕлтерсех тăраççĕ.

Радиоузел урлă колхозниксем агроном, врач, ветеринарипе зоотехника работникĕсен, ялхуçалăх специалисчĕсен лекцийĕсемпе калаçăвĕсене итлеççĕ. Колхозри стена хаçатĕнчи статьясене те радио тăрăх вуласа параççĕ.

Радио кĕртни уйрăмах çамрăксемшĕн пысăк савăнăç. Радио тăрăх вĕсем çĕнĕ кĕнекесем, спектакльсемпе киносем çинчен пĕлеççĕ, çĕнĕ юрăсем юрлама вĕренеççĕ.

Радио колхозниксен пурнăç йăлине кĕрсе пырать. Вăл колхозниксен культурăллă ыйтăвĕсене лайăхрах тивĕçтерме май парать.

С. СИДОРОВ.

КОЛХОЗ ПРЕДСЕДАТЕЛĔСЕН РЕСПУБЛИКĂРИ КАНАШЛĂВĔ

Чăваш АССР ялхуçалăхне малалла аталантармалли задачăсем çинчен

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн председателĕ И. А. Афанасьев юлташ тунă докладран

1951 çул СССР Союзĕн халăх хуçалăхĕ тата культури малалла хăвăртлăн аталаннă çул пулчĕ.

Партипе Совет государстви тата Сталин юлташ питĕ пысăк пулăшу паннипе социализмлă строительствăра Чăваш АССРĕнчи ĕççыннисем те çитĕнÿсем турĕç.

Сталин юлташ патне янă çырури социализмлă обязательствăсене пурнăçласа, социализмлă шутлăра хуçалăхăн питĕ пахалăх майĕсемпе усă курса, Чăваш АССРĕнчи колхозă ялăн ĕçченĕсем, МТС работникĕсем çĕрçĕ тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе 1951 çулта çĕнĕ ÿсĕмсем турĕç. Колхозсем организаципе хуçалăх тĕлĕшпе малалла тĕрекленчĕç.

Сталин юлташ патне янă çырури социализмлă обязательствăсене пурнăçлас ĕçре пирĕн республикăри колхозсем тăванла Мари АССР-ĕнчи колхозсемпе ăмăрта ĕçлени пысăк вырăн йышăнчĕ.

Пирĕн республикăри колхозсем 1951 çулта, 1950 çулхипе танлаштарсан, тĕштырă ытларах туса илчĕç, тырпула пĕрлеллĕрех пухса кĕртрĕç, палăртнă вăхăтран икĕ уйăх маларах государствăна тырă парса татрĕç. Республика çавăн пекех çĕрулми, çăм, утă, йĕтĕн, кантăр, кок-сагыз тата нумай çул ÿсекен курăк вăррисем хатĕрлемелли плансене те срокчен тултарчĕ.

Чăваш республикинчи нумай колхозсем ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне чылай ÿстерме пултарчĕç. Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз вăтам шутпа пĕлтĕр кашни гектартан 168 пăт ыраш, 237,6 пăт çурхи тулă пухса кĕртрĕ; Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕ кашни гектартан 157 пăт ыраш, 153,6 пăт кĕрхи тулă, 129 пăт çурхи тулă туса илчĕ; Чкаловски районĕнчи «Гвардеец» колхоз кашни гектар пуçне 134,4 пăт ыраш пухса кĕртрĕ. Вăрмар районĕнчи «Дружба» колхозри М. Филиппова юлташ ертсе пыракан уй-хир бригади кашни гектартан 198 пăт ыраш, Çĕрпÿ районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозри Л. Тихонова юлташ ертсе пыракан бригада 35,8 гектар çинчи лаптăкран кашни гектар пуçне 195,6 пăт ыраш пухса кĕртрĕ.

Республикăри нумай колхозсем общественнăй выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли виçĕ çуллăх плана тултарас тĕлĕшпе те чылай ĕçсем туса ирттерчĕ. Чылай колхозсем халĕ виçĕ çуллăх планпа пăхнинчен ытларах выльăх-чĕрлĕх усраççĕ.

Ялхуçалăхне аталантарас тĕлĕшпе 1951 çулта тунă çитĕнÿсем ялхуçалăхĕн умĕнче тăракан задачăна — мĕнпур ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне чылай хăпартас, общественнăй выльăх-чĕрлĕх йышне ÿстерсе пынă вăхăтрах унăн тухăçлăхне чылай хăпартас; колхозсен хуçалăхне пур енĕпе те малалла аталантарса пырас задачăна пурнăçлама кăçал тата анăрах кĕрешÿ пуçарма май параççĕ.

1951 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсен итогне туса, докладчик колхозсемпе ялхуçалăх органĕсен ĕçĕнчи çитменлĕхсем çинче тĕплĕ чарăнса тăрать. Çав çитменлĕхсем вĕсем общественнăй хуçалăха хăвăртрах тата пур енĕпе те аталантарса пыма колхозсенчи тата МТС-сенчи шалти ресурссене çителĕксĕр усă курни, агротехникăна кирлĕ пек пурнăçламанни, курăк акмалли уйăлă усă çавраниĕсене пĕрлелесси ерипен пулса пыни, техникăллă культурăсем акса тăвассипе, колхозсенче общественнăй выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессипе, выльăх апачĕ туса илессипе, ялхуçалăх ĕçĕсене механизацилессипе кирлĕ пек ĕçлемен пулаççĕ.

Парти, совет, ялхуçалăх органĕсен татах нумай колхоз руководителĕсен ĕçĕнчи çав йăнăшсемпе çитменлĕхсем хăвăрт тата татăклăн пĕтермелле. Çавăн пек тусан кăна пирĕн республикăри колхозсемпе МТС-сем партипе правительство лартнă задачăсене ăнăçлă татса пама пултараççĕ.

...та ытти удобренисем ытларах хатĕрлесе кăларнă.

Анчах 1952 çулхи çуракине хатĕрленсе ĕçре нумай колхозсенче çаплах пысăк çитменлĕхсем пур-ха. Чылай колхозсем халĕ те тĕштырă, техникăллă культурăсем, курăк, çĕрулми тата пахча çимĕç вăррисене хатĕрлесе çитермен. Вăрнар, уйрăмах Октябрьски, Чурачăк, Первомайски, Сĕнтĕрвăрри районĕсенчи колхозсенче нумай çитмест.

Сывă кунсенчи кашни культура тăрăх çуракин планне тултармалăх вăрлăх хатĕрлесе çитермелле, вăрлăхсене лайăх тасатса хатĕрлемелле, сортлă вăрлăхсен пĕтĕм ресурсĕсене тупса ахаль вăрлăхсене сортлă вăрлăхсемпе улăштарса памалла. Кунсăр пуçне правительство колхозсене Заготзерно склачĕсенчен парса, хуратул, урпа тата вир вăрлăхĕсене улăштарса илме ирĕк панă. Çав ĕçе хăвăртрах туса пĕтермелле, вăрлăхсене тинтерлĕ сыхласа усрамалла, вĕсене кирлĕ-кирлĕ мар çĕре салатса пĕтерни пулмалла мар.

Хăшпĕр колхозсенче кĕрхи тырă калчисем хĕллене начар кĕрсе юнине манăçа хăварма юрамасть. Çавăн пек вырăнсенче, тен, тепĕр хут акмалла пулать. Çавăнпа та страховка фончĕсене кирлĕ чухлĕ çурри вăрлăхĕ хывас пулать.

Нумай колхозсенче вырăнти удобренисем хатĕрлес, вĕсене уй-хире кăларас ĕçсене начар пурнăçлаççĕ.

Вырăнти удобренисем—тислĕк, торф, юпкăн тата ытти удобренисем хатĕрлесе уй-хире кăларас ĕçе вăйлă тырпулшăн пыракан поход тесе йышăнмалла. Кашни колхозрах удобренисем кăлармалли плана тултарма кирлĕ чухлĕ колхозниксем тата туртăм вăйĕ уйăрмалла. Вырăнти удобренисем хатĕрлемелли тата уй-хире кăлармалли плана республикăри кашни колхозăн пĕтĕмпех тултармалла.

Нумай колхозсенче хĕллехи иртнĕ уйăхсенче уй-хирте юр тытас тĕлĕшпе чылай ĕçсем туса ирттернĕ. Çавна пурнăçлама час-час юр ÿкни лайăх пулăшрĕ. Анчах та туса ирттернĕ ĕçпе лăпланса ларма мар. Уй-хирте юр ытларах тытса хăварас тесе, пур йĕрхĕсенче те тата та тăрăшарах ĕçлемелле. Çурхи шывсене колхоз уй-хирĕсенче тытса хăварма халех хатĕрлемелле.

Çуракине ăнăçлăн, ир тата кĕске вăхăтра ирттересси ялхуçалăх машинисене тата орудисене вăхăтра, лайăх юсаса хатĕрленинчен, ут тавраштисемпе транспорт хатĕрĕсене йĕркене кĕртнинчен нумай килет. Анчах та ялхуçалăх машинисене, орудисене юсасси питĕ çителĕксĕр пырать. Ялхуçалăх машинисене, орудисене тата инвентаре çураки пуçланас умĕн тин юсама тытăнас синелĕ практикăна пĕтермелле. Ĕçе халех хастарлăн тытăнмалла, çуракинче кирлĕ пулакан машинисене, орудисене, инвентаре тĕплĕ юсаса хатĕрлемелле.

Докладчик канашлу участникĕсене колхозниксен агротехникăллă пĕлĕвне ÿстерме кирлине, вĕсене курссенче вĕрентес ĕçе лайăхлатма кирлине асăрхаттарать. Çавăн пекех вăл колхозсенче производство планĕсене, приходпа расход сметисене хăвăртрах туса хатĕрлеме кирли çинчен калать.

Докладчик туртăм вăйне çуракине лайăх хатĕрлесе çитерме кирли çинче тĕплĕ чарăнса тăрать.

Кашни колхозрах уй-хирсенче çурхи ĕçсем пуçланас умĕн, тет Афанасьев юлташ, лашасене 3—4 эрнелĕхе канма тăратмалла, начар лашасене вара халех пур ĕçсенчен те хăтармалла, канма тăратмалла, вĕсене лайăх çитермелле, тасатмалла, начар лашасене акана тухиччен мăнтарлатмалла.

Лашасене çуракине лайăх хатĕрлес тесен, халех вĕсем валли тĕрĕшмелле мар фондсем тăвасси çинчен шутласа пăхмалла, утă, концентратсем уйăрмалла.

Лашасене вăхăтра кантарма тăратас тесен, хуçалăхри ĕçсене, государствăна вăрман хатĕрлесе парас ĕçе тĕрĕс йĕркелемелле, çав тĕп ĕçсене мартăн 15-мĕшĕ тĕлне пурне те туса çитермелле.

Хуçалăхра ĕçлеме ĕç вăкăрĕсем пăхса çитентерес ĕçе туса пыман колхозсем, пирĕн шутпа, тĕрĕс мар тăваççĕ. Вăкăр кашни колхозрах, малта пыракан колхозсенче те, кирлĕ, вăл—йÿне ларакан, чăтамлă туртăм вăйĕ, ăна пăхса усрама та йывăр мар.

...мĕнпур йышши выльăх-чĕрлĕх ăратлăхне лайăхлатас, выльăх апачĕн çирĕп никĕсне туса хурас, фермăсенчи йывăр ĕçсене механизацилес ыйтусем çинче тĕплĕ чарăнса тăрать.

Пирĕн республикăра электрификациленĕ колхозсем 100 ытла шутланаççĕ, анчах вĕсенчен нумайăшĕнче электричество вăйĕпе суртсене кăна çутатаççĕ. Çапла, Калинино районĕнчи Карл Маркс ячĕпе тăракан колхозра электричество пур çинчех фермăсенчи ĕçсене механизацилемен.

Фермăсене шыв парас ĕçе анлă механизацилемелле. Ун пек тусан выльăх-чĕрлĕх валли ялан çеçчи шыв пулать, выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхĕ ÿсет, фермăра ĕçлекенсен ĕçĕ çăмăлланать. Шыв парса тăрассине механизацилесен, халĕ шыв кÿрес тĕлĕшпе ĕçлекен лашасем пушанаççĕ, кунпа пĕрлех, 17—18 хут ĕçкунĕ сахалтарах пĕтет.

Колхозсем пĕрлешсе пысăкланнă май, фермăсенчи выльăх-чĕрлĕх йышĕ ÿсрĕ. Çав выльăх-чĕрлĕхе пăхса усрас тĕлĕшпе ĕçлекенсен йышĕ те нумайланчĕ. Выльăх-чĕрлĕх пăхакан кадрсен ĕçне тĕрĕс организацилесси тата вĕсене ĕçшĕн тĕрĕс тÿлесси общественнăй выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ÿстерме кирлĕ тĕп условисенчен пĕри пулать.

Хуçасăрлăх кирек мĕнле ĕçре те сиенлĕ, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре вăл уйрăмах сиен кÿрет. Ĕçшĕн хушса тÿлени хуçасăрлăхпа тата уравниловкăпа кĕрешме, колхозниксене выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ÿстерессишĕн тăрăшса ĕçлеме хавхалантармалли пысăк май пулса тăрать. Çак йĕркене пурнăçламан пирки тата нумай колхозсенче ĕç условийĕсене лайăхлатман пирки выльăх-чĕрлĕх пăхакансем час-часах улшăнса тăраççĕ. Выльăх-чĕрлĕх шугне, унăн тухăçлăхне ÿстерессишĕн колхозниксене ытларах интереслентермелле, вĕсене ĕçлеме лайăхрах условисем туса памалла, вĕсен хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе вăйлатмалла, вĕсен зоотехникăллă пĕлĕвне ÿстермелле.

Афанасьев юлташ малалла кайăк-кĕшĕк ĕрчетес ĕç, выльăх-чĕрлĕх витисем тăвас тĕлĕшпе тăракан задачăсем çинчен тĕплĕн чарăнса тăрать.

— Выльăх-чĕрлĕх витисем çĕнĕрен тăвас тата кивисене юсас тĕлĕшпе,— тет вăл,—1952 çулта пирĕн умра пысăк задачăсем тăраççĕ. Плана кашни колхозрах тултарса, общественнăй выльăх-чĕрлĕх тата кайăк-кĕшĕк валли ăшă, çутă, тата типĕ витесем çителĕклĕ таран тумалла.

Çакна пурнăçлас тесе, кашни колхозрах строительство бригадисем йĕркелемелле, колхозниксенчен строительсен кадрĕсене вĕрентсе хатĕрлемелле, çуна çулĕ пăсăличчен вăрман хатĕрлесе турттарса кăлармалла, государство касма уйăрса панă вăрмансенче пĕтĕмпех усă курмалла, суккунчерен пуçласа общественнăй суртпĕрсем тăвас тата кивисене юсас тĕлĕшпе ĕçе анлă сарса ярас пулать. Сулахи вăхăтпа усă курса, пур колхозсенче те кирпĕч, саман кирпĕч, известь тата ытти вырăнти строительство материалĕсем туса хатĕрлемелле.

Афанасьев юлташ колхозсене ертсе пырас ĕçе лайăхлатасси çинчен каласа, республикăра юлса пыракан артельсем чылай пуррине палăртать. Вĕсем йĕнĕ тухăçлă тырпул туса илеççĕ, вĕсен выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç тата ытти отраслĕсем начар аталаннă, продуктсем тата укçа-тенкĕ тĕлĕшпе тупăш сахал илеççĕ. Çав колхозсем государствăна чылай ялхуçалăх продукчĕсем парса тата укçа-тенкĕ тÿлесе татаймаççĕ, колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх продуктсем, уйрăмах укçа-тенкĕ сахал валеçеççĕ. Çакăн пек колхозсем уйрăмах Октябрьски, Шупашкар, Чурачăк, Шăмăршă тата ытти чылай районсенче нумай.

Партипе совет тата ялхуçалăх органĕсем умĕнче çакăн пек задача тăрать: колхозсене, чи малтанах юлса пыракан артельсене ертсе пырас ĕçе тĕпрен лайăхлатмалла, вĕсене вăтам тата малта пыракан колхозсем танлаштармалла, малашне пирĕн юлса пыракан колхозсем пулмалла мар. Ку тĕлĕшпе колхозсене ертсе пырас ĕçе кашни артелĕн уйрăмлăхне шута илсе туса пымалла, уйрăмах юлса пыракан колхозсене çине тимлĕ пăхмалла. Çав колхозсене агрономи тата зоотехника вăйĕсене лайăхлатмалла. Тракторсемпе тумалли ĕçсен планне çирĕплетнĕ чухне юлса пыракан колхозсене ĕçе чи малтан тумалли палăртмалла, экономика тĕлĕшĕнчен йăпăртарах, колхозсене сортлă вăрлăхсем, ăратлă выльăх-чĕрлĕх парса пулăшмалла, государство кивçен паракан укçа-тенкĕне тата минераллă удобренисене вĕсене уйăрса памалла.

Колхозсене организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен тĕреклетесси, артель хуçалăхне малалла тата пур енчен те вăйлатса пырасси колхоз правленийĕсем, чи малтанах колхоз председателĕсем ĕçе мĕнле ертсе пынинчен нумай килет.

Халĕ, вак колхозсем пĕрлешсе пысăкланнă, нумай колхозсем темиçе яла пĕрлештерсе тăнă май, колхоз председателĕн бригадăсене тата выльăх-чĕрлĕх фермисене ертсе пырассине уйрăмах лайăхлатас пулать. Ĕç нумай пулни те, колхоз председателĕ бригадăсене тăтăш пулма, кашни-кунах выльăх-чĕрлĕх фермисене пулма тивĕçлĕ, унăн çавăн пекех колхоз пĕрлештерсе тăнă кашни ялтах час-часах пулмалла, бригадирсем, ферма заведующийĕсене ĕçре пулăшса пымалла, ялхуçалăхне ертсе пырас ĕçри лайăхлатса вĕрентмелле, малта пыракан бригадирсен ĕç меслечĕне пайлаштармалла, вĕсен ĕçне тĕрĕслемелле.

Колхоз пурнăçĕн Сталинла Уставĕ кăтартса панă демократилле йĕркисем пур колхоз правленийĕсене те, артель тытăмĕн ĕçне лайăх пĕрлеме хушаççĕ. Устав тăрăх, председательне икĕ уйăхра пĕрререн кая мар правлени ларăвне пухма тивĕçлĕ, хăйĕн ĕçĕ çинчен колхозниксен пĕрлехи пухăвĕсене каласа пама, вĕсене государство умĕнчи обязательствăсене мĕнле пурнăçлани çинчен пĕлтерсе тăма тивĕçлĕ. Колхоз председателĕн артель ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтерме критикăна самокритикăна сарса пымалла.

— Ĕç ресурсĕсемпе тĕрĕс усă курассине питех те тимлĕ пăхмалла,— тет докладчик.— Кашни колхозрах ĕç дисциплинине çирĕплетмелле, мĕнпур колхозниксене общественнăй ĕçе хутшăнтармалла.

Колхозсенче пулса иртнĕ отчетпа пухусенче тата отчетла суйлав пухăвĕсенче колхоз председателĕсем тата правленисем нумайăшĕ общественнăй хуçалăха ÿстерес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçленĕ, ĕçсем лайăх тăрăшман, колхозсенчи резервĕсемпе тата ĕç ресурсĕсемпе туллин усă курман. Çакă вăл питĕ тĕрĕс критика, ун пек çитменлĕхсем нумай колхозсенче пур.

Ялхуçалăх артелĕн организацине хуçалăх тĕлĕшĕнчен малалла тĕреклетессишĕн, колхозсен общественнăй пурлăхне ÿстерессишĕн пĕр ывăнмасăр кĕрешмелле. Çакă вăл производствăн общественнăй средствисем—вăрлăхпа выльăх апачĕ тата страховой фондсене, ялхуçалăх инвентарĕне пĕтĕм ÿстермеллине, çавăн пекех укçа пулăшупа отраслĕсене аталантармаллине, общественнăй суртпĕрсем лартмалла, артельсен уйрăм фондне пысăклатмаллине пĕлтерет. Колхозсем малалла вăйлатас тата колхозниксен пурнăçне татах та ытларах ÿстерес, ытларах фондсенчи укçа-тенкĕне выльăх-чĕрлĕх витисем тума, ытти сурт-йĕрсем тума, пулăшулла предприятисем организацилеме, ялхуçалăх машинисемпе ăратлă выльăхсем туяна, сад тума, электростанцисем, пулăсене пĕвесем тума, ытти ĕçсем тума уйăрмалла.

Колхозсен, общественнăй хуçалăхне малалла вăйлатса пырас тесе, техникăллă лайăхрах усă курмалла, колхоз производствинчи культурине ÿстермелле, наука çитĕнĕвĕсене, малта пыракансен опычĕсене анлăрах пурнăçа кĕртсе пымалла. Общественнăй хуçалăха ăнăçлă аталантарма пыма уйрăм колхозниксен харпăр хăй интересĕсене маларах хуни кансĕрлет. Хăшпĕр колхозсенче тырра, ытти продуктсене, çавăн пекех укçа-тенкĕне те ĕçкунĕсем тăрăх ытларах валеçеççĕ, артель хуçалăхĕ валли сахал хăвараççĕ. Çĕрулми тата ытти продуктсене валеçнĕ чухне общественнăй хуçалăх валли кирлĕ пулнине шута илмеççĕ. Çакăн пек ĕçсене пĕр кая хăвармасăр пуçламалла, ĕç кал буржуала шухăшсемпе тимлĕ кĕрешес пулать.

Колхозăн общественнăй пурлăхне сыхлама тата çирĕплетме колхозниксен анлă массисене мобилизацилемесĕр колхозсен общественнăй хуçалăхне аталантарма май çук. Партипе правительство çапла кăтартса парать: çуя колхозниксем, харпăр хăй интересĕсене мала хуракан, колхоз ячĕпе витĕнсе, хăйсен кил-çурт хуçалăхне питех те вăйлатма тăрăшакан, тÿрĕ намăспа ĕçлемен колхозниксене хирĕç кĕрешмелле. Çакăнпа пĕрлех колхозниксене воспитани парас тĕлĕшпе ĕçлемелле, колхозсенче пĕр ывăнмасăр ĕçлени вăйлатса пыни колхозниксен пурнăçне малалла лайăхлатмалли никĕс пулса тăни çинчен анлантарса памалла.

(Юлашки 3-мĕш страницăра).

Республика ялхуçалăхĕ умĕнче çитес 2—3 çул хушшинче тăракан задачăсем

Партипе правительство пирĕн республика ялхуçалăхĕ умне çакăн пек задача лартнă: çитес икĕ-виçĕ çул хушшинче кашни гектар пуçне 18 центнертан кая мар тырпул пухса кĕртмелле, кашни гектартан пĕр çулхи плантацисенчен 22 центнер таран кок-сагыз, 5 центнер йĕтĕн-долгунец, 6 центнер кантăр сÿсĕ, 15 центнер махорка, 160 центнер çĕрулми, 350 центнер тымарçимĕç, 35 центнер нумай çул ÿсекен курăк ути, 30 центнер пĕр çул ÿсекен курăк ути, 300 центнер силос тумалли культурăсем пухса кĕртмелле, çавăн пекех ытти ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне те чылай ÿстермелле.

Общественнăй выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе çакăн пек задачăсем тăраççĕ: çитес икĕ-виçĕ çул хушшинче кашни ĕнерен суса илекен сĕт тухăçлăхне 1.800 килограмма çитермелле, кашни сурăхран 3,5 килограмм çăм, кашни чăхран 110 çăмарта илмелле.

Çав пысăк задачăсене пурнăçлама пирĕн республикăра материально-техникăллă майсем çителĕклĕ.

Правительство йышăннă тăрăх, пирĕн республикăна 1952 çулта тĕрлĕ ялхуçалăх машинисем нумай илсе килме пăхнă. МТС-сем валли 360 трактор, 350 комбайн тата тракторпа кăкарса ĕçлекен машинăсем, автомашинăсем, нефтетарăсем, МТС мастерскойĕсем валли тĕрлĕ оборудованисем нумай илсе килеççĕ. 1952 çулта колхозсене сутма грузсем турттаракан 200 автомашина, çавăн пекех автоприцепсемпе ытти машинăсем илсе килме пăхнă.

Мĕнпур ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне, общественнăй выльăх-чĕрлĕх йышĕпе унăн тухăçлăхне малалла ÿстерсе пырас тĕлĕшпе партипе правительство лартнă задачăсене пурнăçлас ĕçре машина-трактор станцисем тĕп вырăн йышăнаççĕ. Çĕрĕç культурине ÿстересси, тырпул тухăçлăхне хăпартасси тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетесси МТС-сем мĕнле ĕçленинчен нумай килет.

Машина-трактор станцисен ĕçне лайăхлатас тесен, чи малтан, машинăсемпе ĕçлессипе хирĕçле шухăшсене хăвăртрах пĕтермелле. Çавăнтан колхозсем умĕнче тăракан задачăсене ăнăçлă пурнăçласси килет.

МТС-сен ĕçĕнчи ăнăçлăха, ытти мĕнпур ĕçсенчи пекех, кадрсем татса параççĕ. Кашни МТС-ăн ялан ĕçлекен пысăк квалификациллĕ кадрсем çитĕнтермелле. Çавăн пек тăвас тесен, трактористсем, комбайнерсем, трактор бригадисен бригадирĕсем, механиксем, шоферсем тата ытти МТС работникĕсем хатĕрлес, вĕсен пĕлĕвне ÿстерес ĕçе çине тимлĕ пăхмалла.

Трактор бригадисенче ялан ĕçлеме прицепщиксем, трактор бригадисене горючи, шыв турттарса, апат хатĕрлесе пама колхозниксен ялан хи ушкăнĕсене хатĕрлес тата çирĕплетес енĕпе те тăрăшса ĕçлемелле. Çапла тумалла: трактористсем, комбайнерсем хушшинче харпăр хăй колхозĕсенчи колхозниксем пулмалла, механизаторсен кадрĕсем хатĕрлекен курссенче вĕрентме чи лайăх колхозниксене, уйрăмах колхозницăсене, уйăрмалла.

Кашни МТС хăй умне лартнă задачăна 1952 çулта ăнăçлă пурнăçлама пултартăр тесен, мĕнпур тракторсене икĕ сменăпа ĕçлемелле. Çавна пурнăçлама кашни трактор валли пысăк квалификациллĕ икĕ тракторист кирлĕ. Мĕнпур тракторсемпе комбайнерсен сменăри нормăсене тăтăшах тултарса пымалла, ĕçсене пысăк пахалăхпа тата вăхăтра тумалла, сезонти нормăсене пысăк пахалăхпа тултармалла.

МТС-семпе колхозсем тăвакан договорăн пĕлтерĕшне ÿстермелле, икĕ енĕн те уй-хир ĕçĕсем тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе договора илнĕ обязательствăсене пур ĕçсем тĕлĕшпе те пĕр пăркаланмасăр пурнăçламалла, ĕçсене пысăк пахалăхпа тумалла. Хăшпĕр МТС директорĕсемпе колхоз председателĕсем договорсене пăснине, янăх ĕçшĕн пĕр-пĕрне касарнине пĕтермелле.

Унтан докладчик çĕрĕç культурине ÿстерес ыйтупа çыхăнса тăракан задачăсем çинчен: курăк акмалли уйăлă тĕрĕс пусă çавраниĕсене пĕркелесси, нумай çул ÿсекен курăк вăррисем туса илесси, ...не валлатасси, вырăнти тата минераллă удобренисене анлăн усă курасси, йÿçĕ тăпрасене известкалаасси, тăпрана тĕрĕс сухаласа çемçетесси çинче чарăнса тăрать.

Колхоз председателĕсен трактор бригадисемпе уй-хир бригадисен ĕçне тĕплĕ тĕрĕслесе тăмалла, сухалакан тăпра çийне тарăнлатассине, пĕр вăхăтрах уй-хире вырăнти тата минераллă удобренисем кăларассине организацилемелле. Сухалакан тăпра сийне пур çĕрте те 20—22 сантиметрпа кая мар çитермелле. Çĕртме тата кĕрхи çĕртме тунă чухне кок-сагыз, тымарçимĕçсем, çĕрулмипе пахча çимĕç акмалли пусăсене тăпрана 25—30 сантиметр тарăнăш сухаласси анлă пурнăçа кĕртсе пымалла.

Вăйлă тырпулшăн кĕрешес ĕçре вырăнти условисене хăйĕнчи чи лайăх сортлă вăрлăхсемпе акни пысăк вырăн йышăнать. 1952 çулта мĕнпур ялхуçалăх культурисен сортлă вăрлăхсемпе акса хăварма пĕтĕм кирлĕ мерăсене йышăнмалла. Пур колхозсенче те вăрлăх туса илес тĕлĕшпе вăрлăх участокĕсен ĕçне лайăхлатмалла, кашни колхоз хăй валли пысăк тухăç паракан вăрлăх хатĕрлеме пултартăр.

Вăрман тăрăхĕсем тăвас, чи малтан вĕсене пирĕн кăнтăр-хĕвелтухăçри районсенче тăвас, типĕ çырмасене çирĕплетес, уйрăмах çавна Атăл тăрăхĕнчи тата республикăн вăтаçĕрти районĕсенче пурнăçлас, çавăн пекех пĕвесемпе кÿлĕсем тăвас ĕçсене те манса хăвармалла мар. Вĕсене пурнăçлани питех те кирлĕ ĕç пулса тăрать.

Çураки ирттерме хатĕрленесси

Колхоз председателĕсемшĕн, çавăн пекех мĕнпур ялхуçалăх работникĕсемшĕн халĕ çуракине ирттерме хатĕрленесси чи кирлĕ те пысăк задача пулса тăрать. Кăçал колхозсем, пĕлтĕрхипе танлаштарсан, вăрлăх хатĕрлес тĕлĕшпе лайăхрах ĕçлерĕç. Вăрлăхсем сорт тата ытти енĕпе те кăçал иртнĕ çулхинчен авантарах.

Нумай колхозсенче агротехникăн хĕллехи ĕçĕсене лайăх туса пыраççĕ. Пысăк лаптăксем çинче юр тытнă, пĕлтĕрхипе танлаштарсан, уй-хире торф, тислĕк та-

Общественнăй выльăх-чĕрлĕх йышĕпе унăн тухăçлăхне малалла ÿстерсе пырасси çинчен

Партипе правительство общественнăй продуктивлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли виçĕ çуллăх план çинчен йышăннă постановленине пурнăçлани итогĕсем çинчен каласа, докладчик çакна палăртать: нумай колхоз председателĕсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе ертсе пырас тĕлĕшпе пысăк çитменлĕхсем тăваççĕ, общественнăй выльăх-чĕрлĕхе пысăк тухăçлă отрасль туса хурассишĕн çителĕклĕ тăрăшмаççĕ, общественнăй выльăх-чĕрлĕх йышĕпе унăн тухăçлăхне хăвăртрах ÿстерсе пыма кирлĕ мерăсем йышăнмаççĕ, выльăх апачĕн çирĕп никĕсне туса хумалли тĕп ыйтусене татса памаççĕ. Курăксем, выльăхсене çитермелли тымарçимĕçсем, силос тумалли культурăсем акмалли плансене нумай колхозсенче çулсерен тултармаççĕ, вĕсен тухăçлăхĕ пĕчĕккĕ, улăх-çарансене тата кĕтÿ çÿретмелли вырăнсене лайăхлатас тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ.

Чылай колхозсенче ĕçкунĕ тăрăх тырă, çĕрулми валеçнĕ чухне общественнăй выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе çыхăнса тăракан интереса шута илмеççĕ, кирлĕ чухлĕ фураж фончĕсем тумаççĕ. Нумай колхозсенче общественнăй выльăх-чĕрлĕх валли витесем çитмеççĕ; выльăх-чĕрлĕх фермисене ялан ĕçлекен кадрсемпе çирĕплетмен, выльăхсене пăхас ĕçре обезличка пур, фермăсенче ĕçлекенсене ĕçшĕн тÿлес йĕркене час-часах пăсаççĕ.

Выльăхсен ăратлăхне лайăхлатас тĕлĕшпе те ĕçсем çителĕксĕр пулса пыраççĕ.

Колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе хакламаннине пĕтермелле, общественнăй выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç çине государство интересĕсем енчен пăхманнине татăклăн сивлемелле.

Колхозсенчи выльăх-чĕрлĕх пăхакансем умĕнче тăракан тĕп ĕç халĕ çакă пулать: выльăх-чĕрлĕхе ăнăçлă хĕл каçарассишĕн кĕрешмелле. Çакă вăл колхоз кĕтĕвĕсене малалла ÿстерсе пыма, выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ÿстерме, выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем туса кăларассине хăпартма май парать. Хĕллехи вăхăтра мĕнпур выльăха сыхласа хăвармалла, çавăн пекех унăн тухăçлăхне чылай ÿстермелле. Зоотехника наукин çитĕнĕвĕсемпе тата малта пыракан колхозсен опычĕпе анлă усă курса, мĕнпур ĕçсен пахалăхне ÿстермелле, çавна май мĕнпур йышши выльăхсен тата кайăк-кĕшĕкĕн тухăçлăхне чылай хăпартмалла. Выльăх йышне тата унăн тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе тăракан ыйтусене колхозниксен пухăвĕсенче, колхоз правленийĕсен ларăвĕсенче тăтăшах сÿтсе явмалла. 1952 çулта сĕт тухăçлăхне, сурăхсенчен çăм касса илессине ÿстерме, чăхсенчен ытларах çăмарта илме, выльăхсене самăртма кирлĕ ĕçсен мероприятийĕсене кашни колхозрах туса хатĕрлемелле.

Докладчик çакна палăртать: «выльăх-чĕрлĕх вилессине, ама выльăхсем хĕсĕр юлассине хирĕç татăклăн кĕрешмелле, общественнăй выльăх-чĕрлĕх йышĕпе унăн тухăçлăхне ÿстерме мĕнпур майсемпе тĕрĕс тата туллин усă курмалла. Докладчик

КОЛХОЗ ПРЕДСЕДАТЕЛĔСЕН РЕСПУБЛИКĂРИ КАНАШЛĂВĔНЧЕ.

ÜКЕРЧĔК ÇИНЧЕ (сулахайран сылтăмалла): Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз председателĕ, Социализмлă Ĕç Геройĕ В. В. Зайцев юлташ, Мордва АССР-ĕн делегачĕсем — «Путь Ильича» колхоз чабанĕ Е. А. Ноцаев юлташ, Социализмлă Ĕç Геройĕсем А. П. Узойкин, П. И. Равкина, П. Ф. Анисимов юлташсем, доярка К. Т. Максимова юлташ, Улатăр районĕнчи «Путь Ильича» колхоз председателĕ А. Т. Яблонский юлташ, Мордва АССР-ĕнчи «Новая жизнь» колхоз председателĕ М. Я. Самсонкина юлташ тата Чкаловски районĕнчи «Гвардеец» колхоз председателĕ М. Г. Долгов юлташ.

Г. ЗИНЬКОВ фотоÿкерчĕкĕ.

И. А. Афанасьев юлташ доклачӗн вӗҫӗ

Колхоз хуҫалӑхӗн отраслӗсене аталантарассишӗн

Вак колхозсене пӗрлештерсе пысӑклатни колхозсене хуҫалӑхӑн пур отраслӗсене те аталантарма лайӑх майсем туса пачӗ. Кашни колхоз тӗп отраслӗсене—тырпул акса тӑвас тата выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫе—кӑна мар, ҫавӑн пекех ялхуҫалӑх производствин ытти отраслӗсене те аталантарма пултарать.

Пирӗн республикӑри колхозсенче ӗҫ вӑйӗн резервӗсем Совет Союзӗнчи кирек мӗнле урӑх облаҫринчен те пысӑкрах. Ҫавӑнпа та пирӗн колхозсенче артель хуҫалӑхӗн пысӑк тупӑш паракан отраслӗсене—техникӑллӑ культурӑсем акса тӑвассине, сад, пахча, хурт-хӑмӑр ӗрчетес, пулӑ ӗрчетес, строительство материалӗсем тӑвас тата ытти ӗҫсене аталантарма анлӑ майсем пур.

Техникӑллӑ культурӑсем — кок-сагыз, кантӑр, йӗтӗн, махорка, хӑмла ытларах туса илни колхозсене укҫа-тенкӗ тупӑшне ӳстерме, ӗҫкунӗсем тӑрӑх укҫа-тенкӗ ытларах валеҫме май парать. Техникӑллӑ культурӑсем акса тӑвас тӗлӗшпе тӑракан задачӑсене тӗрӗс пурнӑҫлакан колхозсем государствӑна чӗртавар парса пысӑк тупӑш илеҫҫӗ. Сӑмахран, 1951 ҫулта, техникӑллӑ культурӑсем ӳстерме ҫанталӑк условийӗсем лайӑхах пулмарӗҫ пулин те, пирӗн республикӑри колхозсем государствӑна техникӑллӑ культурӑсем туса панӑшӑн укҫан кӑна 20 миллион тенкӗ ытла илнӗ. Елчӗк районӗнчи Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоз тырпул акса туса пурӗ 1.123 пин тенкӗ укҫа-тенкӗ тупӑшӗ илнӗ. Вӑл шутра 30 гектар ҫинчен пухса кӗртнӗ кантӑртан илнӗ тупӑш 659 пин тенкӗ пулнӑ. Кунсӑр пуҫне государствӑна сӳс-кантӑр панӑшӑн колхоз 2.138 килограмм сахӑр, 992 килограмм ӳсентӑран ҫӑвӗ тата 942 центнер жмых илнӗ.

Техникӑллӑ культурӑсем акса тӑвас ӗҫе вӑйлатмаллине кӑтартса тата ҫак ӗҫри ситменлӗхсене палӑртса, докладчик ҫапла калать:

— Кашни колхозрах, ҫутҫанталӑк тата экономика условийӗсене кура, ялхуҫалӑхӗн пулӑшуллӑ отраслӗсене аталантармалла. Хула ҫывӑхӗнчи колхозсенче сӗт-ҫу тӑвас ӗҫе аплӑ йӗркелемелле, ир пулакан пахча ҫимӗҫсем тата ҫӗрулми ӳстермелле, парниксемпе теплицӑсем тумалла, ҫырласем ытларах ӳстермелле. Ҫимӗҫ сачӗсем тата пыл хурчӗсем ӗрчетес тӗлӗшпе пур колхозсен те ӗҫлемелле. Ялхуҫалӑхӗн питех те кирлӗ ҫак отраслӗсене аталантарнипе эпир ӗҫсыннисем валли ытларах апат-ҫимӗҫ туса пама пултаратпӑр, кунсӑр пуҫне колхозсен тупӑшӗ чылай ӳсет.

Шӑхасан районӗнчи Ленин ячӗпе тӑракан колхоз пӗр гектар ҫӗр ҫинче ҫитӗнекен тӗрлӗ ҫырласем сутса ҫулсерен 40-шер пин тенкӗ ытла тупӑш илет.

Хурт-хӑмӑр ӗрчетес ӗҫ пысӑк тупӑш парать. Ҫӗмӗрле районӗнчи «Комбинат» колхозӑн (председателӗ Моисеев юлташ, утар заведующийӗ Ванюков юлташ) утарӗсенче хурт-хӑмӑр 550 ҫемьене яхӑн шутланать. 1951 ҫулта артель 17 тонна таварлӑ пыл илнӗ, ӑна сутса 250 пин тенкӗ яхӑн укҫа тунӑ. Колхозниксене кашни ӗҫкунӗ пуҫне 50-шар грамм пыл валеҫсе панӑ. Ытти нумай колхозсем те пыл хурчӗсенчен пысӑк тупӑш илеҫҫӗ. Анчах нумай колхозсем хурт-хӑмӑр ӗрчетес тӗлӗшпе лайӑх ӗҫлемеҫҫӗ. Республикӑри мӗнпур колхозсен пилӗк пайӗнчен пӗринче пыл хурчӗсем ӗрчетмеҫҫӗ, хӑшпӗр колхозсем 5—10 хурт-хӑмӑр ҫемйи кӑна тытаҫҫӗ.

Ҫак тупӑшлӑ та усӑллӑ ӗҫе хакламаннине пӗтермелле, кашни колхозӑн лайӑх утар пулмалла.

Артель хуҫалӑхне аталантарас ӗҫре ҫавӑн пекех пулӑшуллӑ предприятисем — ҫӑнӑх авӑртмалли армансем, кӗрпе тумалли армансем, ҫӑм таптармалли машинӑсем, транспорт инвентарӗсем тумалли мастерскойсем туни те пысӑк вырӑн йышӑнать. Кашни колхозрах лайӑх йӗркеленӗ тимӗрҫӗ лаҫҫи пулмалла.

Колхозсенче обществӑллӑ ҫурт-йӗрсем тума кирлӗ вырӑнти строительство материалӗсем: кирпӗч, черепица, известь, саман кирпӗч тата ыттисене туса кӑларасси ҫине тимлӗ пӑхмалла. Пур колхозсен те транспорт хатӗрӗсем, хуҫалӑхра кирлӗ пулакан япаласем—кӗреплесем, кӗреҫесем, корзинкӑсем тата ытти хатӗрсем тӑвас тӗлӗшпе ӗҫлемелле. Вӗсем колхозсене кирлӗ. Чылай чухне хӑшпӗр колхозсем ҫӑпӑр, вӗрен, пуртӑ аври тата ытти пӗчӗк япаласене те пасарта туянаҫҫӗ, вӗсене илме чылай укҫа-тенкӗ пӗтереҫҫӗ.

Кашни колхоз председателӗн ҫак ыйтусем пирки шухӑшласа пӑхмалла, кирлӗ транспорт хатӗрӗсене, хуҫалӑхра кирлӗ инвентаре колхозрах тума тытӑнмалла.

Ялхуҫалӑх артелӗн Уставне ҫирӗп пурнӑҫламалла

Колхозсене организаципе хуҫалӑх тӗлӗшӗнчен тӗреклетсе пыма чи кирлӗ условипе вӑл ялхуҫалӑх артелӗн Уставне ҫирӗп пурнӑҫласа пыни пулать. Ялхуҫалӑх артелӗн Уставӗ—колхоз пурнӑҫӗн ҫирӗп законӗ. Анчах та пирӗн республикӑра ялхуҫалӑх артелӗн Уставне пӑснине пӗтӗмӗшпех пӗтернӗ теме ҫук-ха. Ялхуҫалӑх министерстви тата райсовет исполкомӗсем ялхуҫалӑх артелӗн Уставне пӑснине пӗтерес тӗлӗшпе ҫирӗппӗн, татӑклӑн кӗрешмеҫҫӗ. Районсенчи ялхуҫалӑх пайӗсенче ӗҫлекенсен хӑшпӗрисем ялхуҫалӑх артелӗн Уставне пӑсакансене хӳтӗлесе ҫеҫ ларассӗ кӑна мар, хӑйсем те пӑсаҫҫӗ. СССР Министрӗсен Совечӗпе ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗ ялхуҫалӑх артелӗн Уставне пӑснине пурне те кӗске срокра пӗтерме, айӑплисене, колхоз строенине тӑшманӗсем пулса тӑракансене, ҫирӗп явап тыттарма хушрӗҫ.

Калас пулать, хӑшпӗр колхоз председателӗсем Устава пӑсма хӑйсем ирӗк параҫҫӗ. Сӑмахран, нумай колхозсенче колхоз ҫӗрне салатнӑ фактсем пур. 1951 ҫул хушшинче кӑна 280 колхозра колхоз ҫӗрне 2.018 гектар салатнине, колхоз ҫӗрӗсене 791 гектар тытса илнине пӗлтӗмӗр. Обществӑллӑ пурлӑха, продукцисене, выльӑх-чӗрлӗхе тата укҫа-тенкӗне вырӑнсӑр салатса та ялхуҫалӑх артелӗн Уставне пӑсаҫҫӗ. Колхоз пурлӑхне тата укҫа-тенкине салатса пӗтересси час-часах колхоз продукчӗсене, выльӑх-чӗрлӗхе йӳнӗ хакпа сутнипе, хӑшпӗр колхоз руководителӗсем укҫа-тенкӗне хӑрпӑр хӑй тӗллӗн салатса пӗтернипе, колхоз тыррипе колхозниксене аванс шучӗпе, вӗсем мӗн ӗҫкунӗ тунине шута илмесӗр, валеҫнипе пулса пырать.

Уйрӑм колхоз руководителӗсем хуҫасӑрла ӗҫленине пула, артелӗн обществӑллӑ хуҫалӑхӗ пысӑк сиен курать. Сӑмахран, Етӗрне районӗнчи Ильич ячӗпе тӑракан колхоз председателӗ Александров юлташ колхозниксен пӗрлехи пухӑвӗнче йышӑнмасӑрах выльӑх-чӗрлӗхе пусать, ашне пасарта сутать. Ҫав районтах Шверник ячӗпе тӑракан колхоз председателӗ Попов юлташ строительство материалӗсене колхозниксене укҫасӑрах салатнӑ, ытти ҫӗре сутнӑ, ҫав вӑхӑтрах строительство материалӗсем колхоза хӑйне питӗ кирлӗ. Нумай колхозсенче, хуҫалӑхра усӑ курнӑ сӑлтавпа витӗнсе, выльӑх-чӗрлӗхе тата ялхуҫалӑх продукчӗсене салатаҫҫӗ.

Республикӑри чылай колхозсенче уйрӑм ҫынсемпе ӗҫ килӗшӗвӗсем тунӑ чухне Устава пӑсни тӗл пулать. Хӑшпӗр колхоз председателӗсем, колхозниксен пӗрлехи пухӑвӗ йышӑннӑ решенисене пӑсса, выльӑх-чӗрлӗх витисем тата ытти ҫурт-йӗрсем тунӑ ҫӗрте тара кӗрешнӗ ҫынсене ҫитереҫҫӗ, вӗсем валли законсӑр укҫа-тенкӗ тата продуктсем нумай пӗтереҫҫӗ.

Уйрӑм колхозсенче артель тытӑмӗн демократиллӗ никӗсӗсене пӑсни ку таранччен те тӗл пулать. Колхозниксен пӗрлехи пухӑвӗсене сайра хутра ирттереҫҫӗ. тепӗр чухне вӗсене ҫынсем ҫителӗклӗ таран пухӑнмасӑр (кворум пулмасӑр) ирттереҫҫӗ. Колхозсенче отчетлӑ тата отчетпа суйлав пухӑвӗсем ирттернӗ чухне те хӑшпӗр ҫӗрте колхоз демократийӗн йӗркисене пӑснӑ.

Колхоз председателӗсен артель ӗҫӗсене туса пырас ӗҫре колхоз демократийӗн йӗркисене пӑсмалла мар, правлени ларӑвӗсене тата пӗрлехи пухусене вӑхӑтра пухмалла, унта колхозри ситменлӗхсене хӑюллӑн критикламалла условисем тумалла. Сталин юлташ ҫапла вӗрентет: критикӑпа самокритика пире малалла, коммунизм тӑвас ҫулпа хӑвӑртрах пыма пулӑшать.

Доклад вӗҫӗнче Афанасьев юлташ ҫапла калать:

— Хамӑрӑн Тӑван ҫӗршывӑн ҫитӗнӗвӗсене хавхаланса, партипе правительство тата Сталин юлташ промышленноҫа, ялхуҫалӑхне тата культурӑна аталантарассишӗн кулен тӑрӑшни ҫине ответлесе, Чӑваш республикинчи колхозниксем, колхозсенчи, машинӑпа трактор станцийӗсенчи ӗҫлекенсем, ялхуҫалӑх специалисчӗсем мӗнпур ялхуҫалӑх культурисен тухӑҫлӑхне ӳстерес, обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗх шутне тата унӑн тухӑҫлӑхне вӗҫӗмсӗр ӳстерес пирки тӗлӗшпе ҫӗнӗ, социализмлӑ обязательствӑсем илеҫҫӗ. Чӑваш республикинчи социализмлӑ ялхуҫалӑхӗн ӗҫченӗсем колхоз строительствинчи ҫитӗнӳсене нумайлатассишӗн ырми-канми кӗрешме пулаҫҫӗ. Партипе совет тата ялхуҫалӑх органӗсен, МТС-семпе совхозсенче ӗҫлекенсен, ялхуҫалӑх специалисчӗсен тата колхоз председателӗсен халӗ ҫак ӗҫсене пурнӑҫлассишӗн пӗтӗм вӑя хурса ӗҫлемелле: колхозсемпе совхозсен тата МТС-сен ӗҫӗнчи ситменлӗхсене хӑвӑртрах пӗтермелле, 1952 ҫулхи ҫуракине кӑтартуллӑн хатӗрленмелле, кӑҫал мӗнпур ялхуҫалӑх культурисен тухӑҫлӑхне татах ӳстермелле, обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫе вӑйлатса пымалла, кашни колхозра хуҫалӑхӑн пур тӗрлӗ отраслӗсене те аталантармалла. Ҫапла вара пирӗн ҫӗршывра апат-ҫимӗҫ тата промышленность валли чӗртавар тулӑх пултӑр, пирӗн пур колхозсем те большевикла, колхозниксем пуян пурӑнакан пулччӑр.

Виҫӗ республика ӑмӑртӑвӗнче хамӑр илнӗ обязательствӑсене ӑнӑҫлӑ пурнӑҫлассишӗн, ҫапла вара колхозсен обществӑллӑ пурлӑхне пӗр вӗҫӗмсӗр ӳстерессишӗн социализмлӑ ӑмӑртӑва анлӑрах сарса пырар. Хамӑрӑн Тӑван ҫӗршыва тырӑ, аш-какай, ҫу, пахча ҫимӗҫсем, техникӑллӑ культурӑсем ытларах туса парар, ҫапла майпа коммунизм тӑвас ӗҫе, пӗтӗм тӗнчери мир тӗрекӗ пулса тӑракан ССР Союзӗн хӑватне ҫирӗплетес ӗҫе пӗтӗм вӑйпа хала хурар.

Сывӑ пултӑр пирӗн хӑватлӑ Тӑван ҫӗршыв!

Сывӑ пултӑр Ленин—Сталин партийӗ—пирӗн ҫӗнтерӳсен хавхалантараканӗ тата организаторӗ!

Сывӑ пултӑр мир ялавне ҫӳле тытса пыракан, пирӗн тӑван аттемӗр тата учителӗмӗр аслӑ Сталин юлташ!

Французсен аслӑ писателӗ

(Виктор Гюго ҫуралнӑранпа 150 ҫул ҫитнӗ май)

Пӗтӗм вӑхӑтри прогрессивлӑ искусство миршӗн, империалистла реакцие хирӗҫ кӗрешекенсен аллинче хӑватлӑ хӗҫпӑшал пулса тӑрать. Ҫавӑнпа та ӗнтӗ пӗтӗм тӗнчери Мир Совечӗ, халӑхсен кӑмӑлне палӑртса, хӑйӗн юлашки сессийӗнче тӗнчери тӗрлӗ ҫӗршывсенче культурӑри паллӑ кунсене: Н. В. Гоголь вилнӗренпе 100 ҫул ҫитнӗ куна, Виктор Гюго ҫуралнӑранпа 150 ҫул ҫитнӗ куна, Леонардо да Винчи ҫуралнӑранпа 500 ҫул ҫитнине, Авиценна вилнӗренпе 1.000 ҫул ҫитнине палӑртма йышӑнчӗ.

1952 ҫулхи февралӗн 26-мӗшӗнче малта пыракан этемлӗх французсен аслӑ писателӗ-гуманисчӗ Виктор Гюго ҫуралнӑранпа ҫӗр аллӑ ҫул ҫитнӗ куна палӑртать.

Виктор Гюго чаплӑ писатель пулнӑ, унӑн творчестви тӗнчери литература пуянлӑхне кӗрсе юлнӑ, ҫав вӑхӑтрах вӑл тата пултаруллӑ обществӑллӑ деятель, трибун пулнӑ, вӑл хӑй вӑхӑтӗнчи общество пурнӑҫӗн пур ыйтӑвӗсем тӑрӑх та хӑйӗн сӑмахне каланӑ. Гюго халӑхсем хушшинчи мирпе туслӑхшӑн хӗрӳллӗ кӗрешнӗ. Хӑйӗн творчествӑллӑ тата обществӑллӑ-политикӑллӑ ӗҫӗпе вӑл уйрӑм нацисене пӗр-пӗрне сывӑх пулма пулӑшнӑ, хӑйсен интересӗсемшӗн ҫеҫ тӑрӑшса, ҫав нацисем хушшинче курайманлӑхпа пӗр-пӗрне шанман шухӑш саракансене хирӗҫ Гюго ҫав тери хастарлӑ кӗрешнӗ. Гюго халӑхсене союзсене пӗрлешсе. вӑрҫӑ пусаракансене хирӗҫ кӗрешме чӗннӗ.

Халӗ, Америкӑпа Англири империалисчӗсем тата вӗсен ытти ҫӗршывсенчи тусӗсем этемлӗхе хирӗҫ ҫӗнӗ юнлӑ вӑрҫӑ хатӗрленӗ вӑхӑтра, Виктор Гюгон мирлӗ ӗҫпе пурӑнакан ҫынсене хӳтӗлеме чӗнекен хӑватлӑ сасси ҫӗнӗ вӑйпа янӑрать.

«Мобилизациленӗ ҫарсен хӑрушлӑхӗпе пӗрлех, ҫак мӗнпур усал ӗҫсемпе пӗрлех,—тесе чӗннӗ Гюго 1877 ҫулта Лионри рабочисене,—никам ҫӗнтерейми вӑйпа миршӗн тӑрӑшнине те туятӑп. Эпӗ ҫине тӑрса, тепӗр хут калатӑп: кама кирлӗ вӑрҫӑ?—Корольсене. Кама кирлӗ мир?—Халӑхсене.

Ман шутпа, аваллӑх вӑйсем вӑрҫӑшӑн, хальхи вӑйсем миршӗн тӑрӑшаҫҫӗ, вӗсем хушшинче хирӗҫӳ ӳссе пырать.

Граждансем, мир вӑрҫа ҫӗнтерет!»

Гюгон пурнӑҫпа творчество ҫулӗ кӑткӑс та йывӑр пулнӑ. Вӑл 1802 ҫулта Наполеон генералӗсен пӗрин ҫемйинче ҫуралнӑ; унӑн амӑшӗ монархи майлӑ ҫын пулнӑ. Литература ӗҫне Гюго реставраци тапхӑрӗнче, 1-мӗш Наполеона сирпӗтсе антарнӑ хыҫҫӑн влаҫа Францире кивӗ феодалла-абсолютла йӗркесем тума хӑтланнӑ Бурбонсен династийӗ ярса илнӗ вӑхӑтра тытӑннӑ. Амӑшӗн влиянине пула, Гюго ҫамрӑкла ҫырнӑ сӑвӑсемпе одӑсенче монархипе католиксен тӗнне ырланӑ. Анчах монархилле идейӑсемпе хавхаланни нумай вӑхӑта пыман. Францири обществӑн йышлӑ сийӗсем феодалла-католикла реакцин усал ӗҫӗсене хирӗҫ тӑни тӗрӗс пулнине поэт часах ӑнланса илнӗ.

20-мӗш ҫулсен икКӗмӗш ҫуррине тытӑнса В. Гюго вӑйлӑн ӗмӗрсен вӑхӑчӗ каялла таврӑнасса ӗмӗтленекен реакциллӗ романтизмран татӑлнах уйрӑлса каять. «Кромвель» драмӑн (1827 ҫ.) паллӑ умсӑмахӗнче вӑл ҫӗнӗ романтизм принципӗсене кӑтартса парса, литературӑри ҫак прогрессивлӑ, демократиллӗ юхӑмӑн пайлӑ ҫулпуҫӗ пулса тӑрать, вӑл юхӑм халӑх массисем Бурбонсен реакциллӗ политикине кӑмӑлсӑр пулнӑ пирки пуҫланнӑ.

Гюго-романтик искусствӑна демократизацилессишӗн, классицизма — аристократиллӗ, халӑха хирӗҫле тата пурнӑҫран аякра тӑракан искусствӑна хирӗҫ кӗрешнӗ. Вӑл искусствӑн ырлӑх курекен вӑйӗсене хытӑ ӗненнӗ. писатель шухӑшӗпе, искусствӑн халӑха воспитани пама тата тӗнӗмлӗхпе мӗскӗнлӗхрен хӑтӑлма пулӑшмалла. Классикӑлла драмӑри корольсем, рыцарьсем тата авалхи грексемпе римлянсен историйӗнчен илнӗ геройсем вырӑнне Гюго театр сцени ҫине обществӑн чухӑн сийӗсенчи ҫынсене илсе тухать.

Ҫӗнӗ тематикӑшӑн тата пурнӑҫа ҫӗнӗ майсемпе кӑтартса парассишӗн кӗрешнипе Гюго обществӑллӑ-политикӑллӑ кӗрешӳпе тачӑ ҫыхӑнтарать. 1829 ҫулта вӑл «Айӑпланӑ ҫынӑн юлашки кунӗ» ятлӑ повесть ҫырса, айӑпласа вӗлерес йӗркене пӑрахӑҫа кӑларассишӗн нумай ҫул хушши кӗрешет. Ҫав ҫултах ҫырнӑ «Хӗвелтухӑҫ поэмисенче» писатель грек халӑхӗ хӑйӗн нацине Турци пусмӑрӗнчен ирӗке кӑларассишӗн кӗрешнине мухтать. Историллӗ драмӑсенче Гюго хӑй вӑхӑтӗнчи чи кирлӗ ыйтусене кӑларса тӑратать. Ахальтен мар вӑл ҫырнӑ чи лайӑх драмӑсене цензура тыта-тыта чарать, реакциллӗ хаҫатсем ун ҫинчен темӗн тӗрлӗ элек сараҫҫӗ. Ҫав драмӑсенче Гюго феодаллӑ обществӑри пуҫ пулса тӑракан классене ҫав тери хытӑ питлет, монархипе дворянсен йӗрки ҫӗрсе пынине кӑтартса парать. Вӑл пусмӑр тӳссе пурӑнакан праваҫӑр халӑхӑн асапӗсем ҫинчен ҫырса, ҫав вӑхӑтрах унӑн кӑмӑл илемне, сывӑ вӑй-хӑватне тата ырӑ туйӑмӗсене мухтать.

Гюгон демократиллӗ романтизмӗ Францире реалистла искусствӑна аталантарма пысӑк пулӑшу панӑ.

Гюго 1830 ҫулхи июльти революцие пысӑк савӑнӑҫпа саламланӑ. Унӑн демократилле шухӑш-кӑмӑлӗ татах та ҫирӗпленнӗ, ҫав шухӑш-кӑмӑл «Парижри турамӑш соборӗ» ятлӑ произведенире уйрӑмах уҫҫӑн палӑрать. Романра вӑтам ӗмӗрти Париж пурнӑҫне кӑтартса панӑ, историллӗ драмӑсенчи пекех, кунта Гюгон политикӑллӑ шухӑшӗсемпе социальнӑй шухӑшӗсем уҫҫӑн палӑраҫҫӗ, вӑл хӑй вӑхӑтӗнчи чи кирлӗ ыйтусене татса парать. «Парижри турамӑш соборӗ» ятлӑ романта Гюго аристократин пим усӑсӑр, ирӗксӗр пурнӑҫне хирӗҫлесе халӑхӑн асаплӑ та хӗн-хурлӑ пурнӑҫне кӑтартса парать. Вӑл произведенире пӑлхава ҫӗкленме чӗнни, асап тӳсекен, анчах парӑнман халӑха чунтан хӗрхенни витӗрех курӑнать.

Июльти революци халӑха ирӗк паман. Влаҫа Луи-Филипп королӗпе пӗрле финанс буржуазийӗ ярса илнӗ. Буржуази революциллӗ рабочисен юхӑмне тискеррӗн пусарнӑ. Анчах Гюго, иккӗленекен вак буржуалла демократ пулса, хӑй вӑхӑтӗнчи класс кӗрешӗвне ӑнланса илме пултарайман. Социальнӑй хирӗҫӳсене вӑл ҫав стройрах ҫынсен кӑмӑл-шухӑшӗ лайӑхланса пынӑ май татса пама шутланӑ. Гюго июльти монархипе килӗшнӗ. 1841 ҫулта вӑл Академи членӗ, 1845 ҫулта Франци пэрӗ пулса тӑрать.

Писателӗн пурнӑҫпа творчество ҫулӗ малалла аталанса пырас ӗҫре Февральти революци тата республика туса хуни пысӑк вырӑн йышӑнса тӑнӑ. Историре хӑй пӗччен пирвайхи хут кӗрешӗве ҫӗкленнӗ пролетариатӑн революциллӗ кӗрешӗвӗнчен хӑраса ӳксе, буржуази уҫҫӑнах политикӑллӑ реакци ҫулӗ ҫине тӑнӑ. Гюго хӑй республиканец пулни ҫинчен пӗлтернӗ, ӗмӗрӗ тӑршшӗпех вӑл республикӑпа демократие шанчӑклӑ хӳтӗленӗ. Писатель республикӑллӑ строя сыхласа хӑварма политикӑллӑ ӗҫе активлӑн хутшӑнать. Канашлакан тата Законсем кӑларакан пухусен депутачӗ пулса, вӑл ӗҫхалӑхне ҫине тӑрса хӳтӗлет, республикӑна пӗтерсе хума тӑрӑшакан Луи Бонапартӑн реакциллӗ ушкӑнне тӑрӑ шыв ҫине кӑларать.

Луи Бонапарт 1851 ҫулта монархиллӗ переворот туса, хӑйне III-мӗш Наполеон император тесе пӗлтернӗ хыҫҫӑн Гюго тӑван ҫӗршывран тухса каять. Вӑл империн ниҫтан килӗшми тӑшманӗ пулса тӑрать. Луи Бонапарт правительстви писателе политикӑлла преступник тесе пӗлтернӗ, унӑн пуҫӗшӗн 25 пин франк пама пулнӑ. Гюго малтан Бельгире пурӑнать, унтан, реакци хӗсӗрленине пула, Британи утравӗсем ҫине куҫса каять.

Вунтӑхӑр ҫул хушши Гюго III-мӗш Наполеона хирӗҫ кӗрешнӗ. «Пӗчӗк Наполеон», «Пӗр усал ӗҫ историйӗ» ятлӑ кӗнекесенче, «Тавӑру» ятлӑ сатирӑллӑ сӑвӑсен сборникӗнче вӑл «Франци ирӗклӗхне вӑрланӑ» ирсӗр авантюриста тӑрӑ шыв ҫине кӑларнӑ. Писатель тирана пулӑшакансене—старикӗсемпе ачасене персе вӗлерекен генералсене, терророа усал ӗҫсем тума пиллекен епископсене, сутӑнчӑк журналистсемпе писательсене, влаҫа законсӑр тытса илнӗ ҫыншӑн хаваслансах ӗҫлекен академиксемпе чиновниксене ылханнӑ.

Гюго ҫав вӑхӑтра ҫырнӑ сӑвӑсемпе статьясенче халӑха пусмӑра хирӗҫ кӗрешме чӗннӗ. Писатель амнисти памипе усӑ курма килӗшмен,—ирӗклӗхпе пӗрле кӑна Францие таврӑнӑп, тесе пӗлтернӗ.

Тӑван ҫӗршывӗнчен аякра пурӑннӑ вӑхӑтра Гюго ячӗ тӗнчери демократиллӗ ҫынсем хушшинче ҫав тери паллӑ та хисеплӗ ят пулса тӑрать. Ҫак хисепе писатель вак халӑхсен ирӗкӗпе никама пӑхӑнманлӑхне империалистла державӑсенчен, вӗсен ӳссе пыракан пусмӑрӗнчен хӑюллӑн хӳтӗленӗ. Тӗнчери халӑхсем нацин ирӗклӗхӗшӗн кӗрешнине писатель яланах кӑмӑлланӑ. 1859 ҫулта Гюго США правительствине Виргинире восстани тунӑ негрсен ҫулпуҫне Джон Браунна вӗлерме приговор йышӑннине хирӗҫлесе протест панӑ. Вӑл Итали халӑхӗн Австри пусмӑрӗнчен ирӗке тухассишӗн пыракан юхӑмне активлӑ хӳтӗленӗ. Писатель Англи колонизаторӗсем Пекина туртса илсе, хулара пурӑнакан ҫынсене тискер асап кӑтартнине тӑвӑллӑн сивленӗ. 1870 ҫулта Куба утравӗ ҫинче пурӑнакансем Испани пусмӑрне хирӗҫ восстани туссан, Гюго ҫапла ҫырнӑ: «Эпӗ Кубӑна Крита хӳтӗленӗ пекех хӳтӗлетӗп. Пӗр наци те тепӗр нацие пусмӑрлама тивӗҫлӗ мар!.. Пӗр ҫын та тепӗр ҫынна пӑхӑнтарма тивӗҫлӗ мар, ҫавӑн пекех пӗр халӑх та тепӗр халӑха пӑхӑнтарма тивӗҫлӗ мар!»

Тӑван ҫӗршывран тухса кайсан Гюго хӑйӗн пысӑк романӗсене ҫырать: «Пусмӑрти ҫынсем», «Тинӗс патӑрӗсем», «Яланах кулакан ҫын». Вӗсенче ҫав вӑхӑтри чи паллӑ событисем, писателе яланах хумхантаракан социальнӑй пурнӑҫри чи паха ыйтусем палӑрса юлнӑ.

Капитализмра хӗн-хур курса пурӑнакан, нимӗнле правасӑр халӑх массисен асаплӑ кун-ҫулӗшӗн Гюго ҫав тери хыпса ҫуннӑ. Хӑйӗн произведенийӗсенче вӑл халӑх хушшинчен тухнӑ ҫынна—пурнӑҫри тӗрӗсмарлӑха пула мӗскӗне тухса сураланса юлнӑ ҫынна—хӗрӳллӗ хӳтӗленӗ. «Пусмӑрти ҫынсем» ятлӑ романта писатель буржуаллӑ обществӑн синейсене, унӑн суя моральне, суд ӗҫӗн тӗрӗсмарлӑхне, укҫа влаҫӗ вилӗм патне илсе пынине, пуҫ пулса тӑракан классен ҫатканлӑхне, вӗсем ниме те тӑманнине ҫав тери пысӑк вӑйпа тӗрӗс кӑтартса панӑ.

«Тинӗс патӑрӗсем» роман этем ӗҫӗ пурне те ҫӗнтернине ырласа юрланӑ мухтав юрри пек янӑрать, унта Гюго ҫын ҫутҫанталӑкӑн хаяр вӑйӗсемпе ҫине тӑрса, ҫирӗп кӗрешнине кӑтартса парать.

«Яланах кулакан ҫын» романта Гюго иртнӗ вӑхӑтсен историне аса илет. Вӑл унта XVII тата XVIII-мӗш ӗмӗрсем хушшинчи Англири обществӑллӑ пурнӑҫ ҫинчен ҫырать. Ҫапла пулсан та, роман ҫав вӑхӑтри чи кирлӗ ыйтусене кӑларса тӑратать. Гюго унта халӑха пӗртанлӑхпа политикӑллӑ правӑсем паманнине, чухӑнсене пуянсем пусмӑрланине закон туса хуракан «тӗрӗс суда» ҫав тери хытӑ питлет. Ҫав вӑхӑтрах писатель халӑхӑн моральне, ҫирӗплӗхне мухтать. Романӑн тӗп геройӗ Гуинплен халӑх хушшинчен тухнӑ ырӑ чунлӑ ҫын, унӑн пит-куҫне король хушнипе илемсӗрлетсе янӑ. Гуинплен лордсен палатинче, ахаль ҫынсен прависене хӳтӗлесе, хӗрӳллӗ ҫак сӑмах калать: «Эсир мана пӗр ҫын анчах тесе шутлатӑр-и? Ҫук, эпӗ символ. Эпӗ хам пекех илемсӗрлетнӗ этемлӗх символӗ. Мана илемсӗрлетнӗ пекех пӗтӗм этемлӗхе илемсӗрлетнӗ. Ман куҫа, сӑмса шӑтӑкӗсене, хӑлхасене илемсӗрлетнӗ—этемлӗхӗн правине, законне, чӑнлӑхне, ӑс-тӑнӗпе шухӑшне илемсӗрлетнӗ».

Гюго Парижа 1870 ҫулта, Иккӗмӗш империне пӗтернӗ хыҫҫӑн таврӑннӑ. Ҫав вӑхӑтра Седан патӗнче катастрофа пулнӑ. Франци ҫӗрӗ ҫине Прусси ҫарӗсем ҫырса кӗнӗ. Тӑван ҫӗршыва хӗрӳллӗ юратса, Гюго Франци халӑхне мӑшкӑл кӑтартнӑшӑн ҫав тери хурланнӑ. Ӳтмӑл сакӑр ҫулхи старик тӑшман хупӑрласа илнӗ Парижра пур йывӑрлӑхсене те хӑюллӑ тӳссе ирттернӗ. Вӑл граждансене тӑван ҫӗршыва хӳтӗлеме, захватчиксене хирӗҫ хӗҫпӑшалпа кӗрешме чӗннӗ. Гюгон ҫав вӑхӑтри патриотла лирики Францие Гитлер оккупациленӗ ҫулсенче вӑрттӑн тухса тӑнӑ хаҫатсенче темиҫе хутчен те пичетленнӗ, ҫав лирика Французсен писателӗсене—патриотсене хавхалантаракан тӗслӗх пулнӑ.

Ирӗксӗрленипе пусмӑрланине хирӗҫ кӗрешни Гюго произведенийӗсене тарӑн шухӑш параҫҫӗ, пысӑк вырӑна тӑратаҫҫӗ. Анчах писатель буржуаллӑ общество характерне тӗрӗс ӑнланман, вӑл буржуазипе пролетариат хушшинчи класс кӗрешӗвне йышӑнман, ҫавӑнпа та общество аталанӑвӗн ҫулӗсем ҫинчен тӗрӗс ҫырма пултарайман.

Гюго буржуалла демократи мирлӗ майпа аталанса пырасса шаннӑ. Ҫавӑнпа та вӑл Париж Коммунин пӗлтерӗшне хак пама пултарайман. Рабочи класс ирӗке тухассишӗн буржуазие хирӗҫ аслӑ кӗрешӗве тухсан, Гюго кӗрешӗве хутшӑнмасӑр юлма тӑрӑшнӑ. Ҫапла пулсан та вӑл паракӑннӑ коммунарсене тискер асап кӑтартса вӗлерекен Версаль палачӗсене хирӗҫ хӑюллӑн тухнӑ.

Францири революци вӑхӑтӗнчи ӗҫсем ҫинчен ҫырнӑ «Тӑхӑрвун виҫҫӗмӗш ҫул» ятлӑ юлашки пысӑк романӗ те Гюго шухӑшӗсене уҫҫӑн кӑтартса парать. Франци республиканецӗсем контрреволюциллӗ пӑлхавҫӑсене хирӗҫ кӗрешни ҫинчен ҫырнӑ чух Гюго революци сантӑкӗсен хӑюллӑхӗпе ҫирӗплӗхне, вӗсен ырӑ ӗмӗчӗсене мухтать, ҫав вӑхӑтрах... пурне те касарма, ырӑ чӗреллӗ пулма, ӗмӗре пыракан пӗтӗм этемлӗх моральне сыхлама чӗнет, ҫав мораль, унӑн шучӗпе, мӗнпур ҫынсене, вӗсен политикӑллӑ шухӑшне пӑхӑнмасӑр, пӗрле пӗрлештерет иккен.

Ҫавӑн пек иккӗленнӗ пулсан та, Гюго яланах аслӑ гуманист пулнӑ. Вӑл халӑхпа ҫын правине пӑснине, киревсӗр пусмӑрланине яланах хӑватлӑн питлесе, пусмӑрта пурӑнакан телейсӗр массӑсене хӳтӗленӗ.

Гюгон чи хаклӑ, пӗтӗм прогрессивлӑ этемлӗх культурин пуянлӑхӗ пулса тӑнӑ произведенийӗсене халӗ ку чухнехи Францин реакциллӗ буржуазийӗ мӑшкӑласа кулмалли япала туса хунӑ. Уолл-стритри хуҫасен кӑмӑлне юрас тесе, нацин тивӗҫлӗхне сутнӑ Франци буржуазийӗ аслӑ гуманист ятӗнчен мӑшкӑласа кулать, унӑн творчествине пӑсать.

1941 ҫулта Гитлер генералӗ Штюльпнагель, фашистла ҫара тупӑсем тума бронза кирлӗ тесе, Виктор Гюгон хӑй ячӗпе тӑракан площадьри статуйине илсе кайма приказ панӑ. Французсенчен кулса, площадре статуя йӗнчи чула анчах хӑварнӑ. Тепӗр вунӑ ҫултан, Париж икӗ пин ҫул тултарнине уявланӑ чухне, хулари муниципальнӑй совет, де Голль генерал тӑванӗ—Пьер де Голль председатель пулса ӗртсе пынипе фашистла оккупантсен ӗҫне вӗҫне ҫитернӗ. Гюго статуйин никӗсне пӗтернӗ, ун вырӑнне ҫӗнӗ маркӑллӑ «Форд» автомобиль вырнаҫтарса лартнӑ.

Францире тухса тӑракан прогрессивлӑ хаҫатсем Франци буржуазийӗ нацин интересӗсене сутнине кӑтартакан ҫак киревсӗр факта тивӗҫлипе хак пачӗҫ.

Писатель-коммунист Луи Арагон «Леттр Франсезре» тӑрӑхса ҫапла ҫырчӗ: «Виктор Гюго площадӗнчи «Форд» автомобиль вӑл — Эйзенхауэртан Марли туса хуракансем шухӑшласа кӑларнӑ символ, вӑл доллара пӑхӑнса тӑнин символӗ... Ют ҫӗршывран кӳрсе килнӗ ҫавӑнӑҫусӑр урапана поэт памятникӗ пулнӑ вырӑна пырса лартни Парижа ют ҫӗршывран килсе пӑвнине, пусмӑрланине, чуралантарнине кӑтартса парать».

Гюгон пӗтӗм пурнӑҫӗпе творчестви хӑйӗн тӑван ҫӗршывӗшӗн патриотла тӑрӑшнине кӑтартакан ҫутӑ тӗслӗх, халӑхсем хушшинчи мирпе туслӑхшӑн кӗрешмелли тӗслӗх пулса тӑрать. Анӑ, мӗншӗн ӗнтӗ Америкӑри вӑрҫӑ пуҫаракан империалистсен тарҫисем—Францири мӗнпур йышши реакционерсем—аслӑ писателе курайманҫҫӗ, унтан хӑраҫҫӗ. Анчах хӑйсен ҫӗршывӗн наци интересӗсемпе сут тӑвакан биржевиксемпе спекулянтсем, дипломатсемпе сутӑнчӑк ҫырусӑсем, генералсемпе полицейскисем тем пек хӑтлансан та, Франци халӑхӗпе пӗтӗм этемлӗх Виктор Гюго ятне асран ямӗҫ.

«Виктор Гюго,—тесе ҫырчӗ ҫав статьярах Арагон,—Париж пекех, Франци пекех хальхи ҫын. Франци икӗ пин ҫул ҫеҫ пурӑнать-и вара? Виктор Гюго миршӗн кӗрешекен халӑхсен ирӗкӗ пекех хальхи ҫын. Париж пекех, Франци пекех Виктор Гюго «Священнӑй союзсем» тӑвакан, «форасемпе» тата нефтьпе спекуляци тӑвакан интригансене килӗшмест. Анчах Виктор Гюго кунта хӑй вилӗнче, ҫавна хирӗҫ тӑма никам та нӑй ситереймӗ».

П. ФЕДУНОВ.

Научнӑй экспедици

Сталин юлташӑн «Марксизм тата чӗлхе ыйтӑвӗсем» произведенийӗ педагогикӑпа методика наукисен работникӗсене те шкул ӗҫне вӗренесси ҫине ҫӗнӗлле пӑхма хавхалантарчӗ. РСФСР Педагогика наукисен академийӗ шкул ӗҫне тӗплӗн пӗренес тӗлӗшпе методикӑлла научнӑй экспедицисем организацилерӗ. Вӗсенчен пӗр экспедицийӗ халӗ Чӑваш республикинчи Вӑрнар районӗнчи шкулсене килчӗ.

Февралӗн 17-мӗшӗнче экспедици начальникӗ педагогика наукисен кандидачӗ Е. И. Корсневский юлташ Вӑрнар районӗнчи шкул директорӗсемпе учительсен канашлӑвне ирттерчӗ. Унта вӑл экспедици задачисем ҫинчен каласа пачӗ.

Чи кирлӗ задачӑсенчен пӗри,—терӗ вӑл,—Вӑрнар районӗнчи шкулсен вӗренӳ ӗҫне наука енчен тӗплӗн тишкерсе тухасси, учительсене педагогикӑпа методикӑлла ҫӗнӗ меслетсемпе усӑ курма вӗрентесси пулса тӑрать.

Экспедици уйрӑмах вырӑс чӗлхипе литература, тӑван чӗлхепе литература, нимӗҫ чӗлхи, математика предмечӗсене, юрлама тата ӳкерчӗксем тума вӗрентесси, черчени урокӗсем чӑваш шкулӗсенче мӗнле пулса пынине тӗпчес тӗллеве лартнӑ. Ку ӗҫе РСФСР Педагогика наукисен академин специалисчӗсене хутшӑнтарнӑ. Вӗсем хушшинче, Ф. Советкин профессор, педагогика наукисен кандидачӗсем Филиппов, Вальтов, Липаев тата Мальцева юлташсем, художествӑллӑ воспитани тӗпчев институчӗн аслӑ научнӑй сотрудникӗсем Ливчакпа Грищенко юлташсем.

Экспедици вырӑнти кадрсене те ӗҫе хутшӑнтарать.

Халӗ экспедици хӑйӗн ӗҫне тытӑнчӗ. Чи малтан вӑл Уравӑшри вӑтам шкулпа Упнерти ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкулсенче ӗҫлет.

С. ЮШКОВ,
Методикӑлла научнӑй экспедици членӗ, Педагогика наукисен академи аспиранчӗ.

Ҫавӑрӑнӑҫусӑр ӗҫлениие пула

1951 ҫулта Вӑрнар райпотребсоюзӗ тавар ҫавӑрӑнӑш планне пӗр кварталта та тултарман. Райпотребсоюз правленийӗн председателӗ Гордеев юлташ тавар ҫавӑрӑнӑш планне тултарманнине тӗрлӗ сӑлтавсемпе витме пӑхать. Сӑлтавӗ райпотребсоюз руководителӗсем ҫавӑрӑнӑҫусӑр ӗҫленинче.

Вӑрнар районӗнче райпромкомбинат, апат-ҫимӗҫ комбиначӗ, промартельсем пур. Вӗсем ҫулсерен миллионшар тенкӗлӗх продукци туса кӑлараҫҫӗ. «Скороход» промартель вӗрен ... тилхепе, атӑ-пушмак, савӑт-сапа, «Труд» промартель—сӗтел-пукан, урапа кустӑрми, райпромкомбинат урапа-ҫуна, кӑмрӑк т. ыт. те чылай туса кӑларать. Райпотребсоюз магазинӗсемпе ларекӗсенче ҫак япаласене сутмаҫҫӗ. Пӗлтӗр райпотребсоюз тавар туянма промкомбинатсемпе тата промартельсемпе договор туман.

Халӗ ялта строительство ӗҫӗсем кунтан-кун вӑйланса пыраҫҫӗ. Пӗрлешсе пысӑкланнӑ колхозсем выльӑх-чӗрлӗх витисем, электростанцисем, клубсем, колхозниксемпе служащисем пурӑнмалли ҫуртсем нумай лартаҫҫӗ. Ӗҫсыннисене те, колхозсемпе учрежденисене те строительство материалӗсем—кирпӗч, известь, черепица нумай кирлӗ. План тӑрӑх райпотребсоюзӑн кирпӗч туянма Канаш районӗнчи «Строитель» тата Пӗрӗрӗс районӗнчи «Красный строитель» промартельсемпе, известь туянма—Вӑрмар районӗнчи «Универсал» промартельпе договор тумалла пулнӑ. Анчах вӑл асӑннӑ артельсемпе ҫыхӑну тытман, кирпӗчпе известь райна кӳрсе килмен.

Райпотребсоюз вырӑнти таварсем туянма тӑрӑшманнипе райпромкомбинатпа промартельсем хӑйсем туса кӑларакан продукцие Чернигов, Свердловск, Горький облаҫӗсене ӑсатаҫҫӗ. Уйрӑм ялпосем хӑшпӗр таварсене халӑха мӗн чухлӗ кирлине шута илмесӗр кӳрсе тултараҫҫӗ, ҫавна май оборотри укҫа-тенкӗ ҫавӑрӑнӑшне чакараҫҫӗ, кирлӗ япаласем кӳрсе килес ӗҫе чӑрмантараҫҫӗ. 1951 ҫулхи декабрь уйӑхӗнче Хапӑс ялповӗ 4,6 пин тенкӗлӗх тӑрантас втулки кӳрсе килнӗ. Паллах, ҫавӑн чухлӗ втулка туянакансем таврара ҫук. Хӑшпӗр продавецсем ӗҫре ответлӑх туймаҫҫӗ, суту-илӳ йӗркисене пӑсаҫҫӗ. Волонтерти ларекра ӗҫлекен Архипова продавец ӗҫе вӑхӑтра тухмасть, ларек час-часах хупӑ тӑрать. Тавар илме пыракансен ӑна килне кайса чӗнме тивет.

Районта вӑрманпромхоз ОРС-ӗ пур. Ӑна вӑрманта ӗҫлекенсен ыйтӑвӗсене тивӗҫтерме организациленӗ. ОРС начальникӗ Жасковенков юлташ плана ҫӑмӑл тултарма пӑхать. Вӑрнар поселокӗнче вӑрман хатӗрлекен пӗр рабочи те ҫуккине пурте пӗлеҫҫӗ. Ҫапла пулин те ОРС кунта виҫӗ магазин, икӗ ларек, столовӑй, пекарьня тытать. Ҫав вӑхӑтрах вӑрманта ӗҫлекенсем промышленность таварӗсемпе апат-ҫимӗҫ ҫителӗклӗ кӳрсе килменнишӗн асапланаҫҫӗ.

Кӑҫалхи январь уйӑхӗнче тавар ҫавӑрӑнӑш планне тултараймани райпотребсоюз правленийӗ пӗлтӗрхи ситменлӗхсенчен тивӗҫлӗ вывод туманнине кӑтартать. Вӑрнар райсовет исполкомӗпе Чӑвашпотребсоюзӑн райпотребсоюз руководителӗсене ситменлӗхсене пӗтерме, суту-илӳ ӗҫне ҫӳлӗ шая хӑпартма пулӑшмалла.

А. ФОМИН.

Тĕнчери халăхсем Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 34 çул тултарнине уявлаççĕ

Китай

Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 34 çул тултарни çинчен Шанхайри хаçатсем нумай çыраççĕ.

Çак чаплă уяв çинчен «Дагунбао» хаçат уйстатья çырса кăларнă. Унта вăл çапла çырать: февралĕн 23-мĕшĕнче пĕтĕм тĕнчери халăхсем, совет халăхĕпе пĕрле, Совет Çарне тунăранпа 34 çул тултарнине савăнăçлă уявлаççĕ... Империалистла лагерь халĕ васкасах тĕнчери виççĕмĕш вăрçа хатĕрлет. Çынсен пурнăçĕшĕн тата цивилизацишĕн пысăк хăрушлăх тухса тăчĕ. Анчах Совет Çарĕ пĕтĕм тĕнчери мире хытă сыхласа тăрать.

«Вэньгуйбао» хаçат: Совет Çарĕ, Сталин Генералиссимус аслă ертсе пынипе, пĕтĕм тĕнчери халăхсен шанчăкĕпе тĕрекĕ пулса тăрать, тесе çырать.

Болгари

Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 34 çул тултарнине Болгари халăхĕ савăнăçлă уявланă. Болгари халăхне ирĕке кăларнă Совет Çарĕн уявĕ ячĕпе çĕршывра пур çĕрте те ĕççыннисен пухăвĕсене ирттернĕ. Çак чаплă уяв ячĕпе София, Пловдив хулисенче, Сталин хулинче тата ытти хуласенче физкультурниксен массăллă ăмăртăвĕсем, альпинистсемпе туристсен походĕсем пулса иртнĕ.

ССР Союзĕн Хĕçпăшаллă Вăйĕсен чаплă уявĕ çинчен Болгарири хаçатсем нумай çыраççĕ. Февралĕн 23-мĕшĕнче столицăри пур хаçатсенче те Совет Çарĕ çинчен статьясем, очерксем тата ытти материалсем нумай пичетленнĕ. Хаçатсен пĕрремĕш страницисенче аслă çулпуçăн генийллĕ полководецăн И. В. Сталин Генералиссимусăн портречĕсене пичетленĕ.

Венгри

Венгри халăхĕ, Совет Союзĕнчи халăхсемпе пĕрле, Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕн кунне уявланă. Çак чаплă уяв çинчен хаçатсем статьясемпе ытти материалсем нумай пичетленĕ.

«Сабад неп» хаçатра Венгри оборонин министрĕн пĕрремĕш заместителĕн Ш. Ногради генерал-лейтенантăн статьине пичетлесе кăларнă. Унта вăл çапла çырать: Совет Çарĕ 34 çул тултарнине уявланă кунсенче Венгрипе Совет Союзĕн туслăх уйăхлăхĕ пуçланчĕ. Çак икĕ совыти пĕр-пĕринпе тачă çыхăнса тăраççĕ. Совет Союзĕпе Венгри туслăхне çирĕплетесси мухтавлă Совет Çарĕ пирĕн тăван çĕршыва ирĕке кăларнăранпа пуçланчĕ. Паян Венгрири кашни ĕççынни тата Венгри çарĕн кашни воинĕ хамăра ирĕке кăларакана—Совет Союзĕн мухтавлă халăхне, унăн паттăр çарне тата пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен аслă çулпуçне — Сталин юлташа тăванла хĕрӳллĕ юратса хисепленине палăртать.

Чехословаки

Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕн кунне палăртса, Чехословакири хаçатсем статьясемпе фотоӳкерчĕксем нумай пичетленĕ.

«Руде право» хаçат «Совет Çарĕ — мирĕн никам çĕнтерейми вăйĕ» ятлă статьяра çапла çырать: Совет Çарĕн вăйне тĕнчери мирĕн тĕнчери мир çирĕплетессине ертсе пыракан И. В. Сталин Генералиссимуса Совет Союзĕнче кăна мар, тĕнчери мĕнпур çĕршывсенче те хĕрӳллĕ саламлассĕ.

«Обрана лиду» хаçат пĕрремĕш страницăра Совет Союзĕн Генералиссимусĕн И. В. Сталинăн портретне пичетленĕ. Хаçатăн шалти страницисем çинче «Ленинпа Сталин — Совет Çарĕпе унăн çĕнтерӳсен организаторĕсем» ятлă статья пичетлесе кăларнă.

Февралĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС).

„Совет Çарĕ—халăхсем хушшинчи мирпе туслăх çарĕ"

Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 34 çул тултарни çинчен Иранри хаçатсем çырни

ТЕГЕРАН, февралĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). «Навиде азади» хаçат ĕнер пĕрремĕш страницăра И. В. Сталин юлташăн портретне тата Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ çинчен статьяна пичетленĕ.

Совет Çарне организацилени, унăн кĕрешӳллĕ çĕнтерӳсен историйĕ çинчен кĕскен каласа панă хыççăн хаçат: «Совет Çарĕ — халăхсен хушшинчи мирпе туслăх çарĕ, халăхсен мирлĕ пурнăçне, никама пăхăнманлăхне тата суверенитетне хӳтĕлекен çар», тесе çырать.

Совет Çарĕ Ирана Германи фашизмĕ тапăнса кĕрессине ирсе ама пулăшни çинчен каласа, «Навиде азади» хаçат çапла çырать: «Иран халăхĕ, пирĕн çĕршыври рабочисемпе ĕççыннисем Совет Союзĕнчи халăхсене, социализмлă аслă çĕршыври рабочисемпе хресченсене, Совет Çарĕн руководителĕсемпе Сталин Генералиссимуса уяв ячĕпе чунтан-чĕререн саламлаççĕ. Сталин Генералиссимусăн çар ĕçĕнчи генийĕ Совет Çарне çĕнтерӳ патне илсе çитерчĕ. Иран халăхĕ Совет Çарне мира хӳтĕлесе хăварассишĕн тата социализма тĕреклетессишĕн кĕрешекен пысăк вăй тесе шутлать, тата ăна пыма ырă сунать».

«Хĕрлĕ Çар Ирана тăнă чухне хăйĕн çинчен Иранри çынсен чĕрисене ырă шухăш хăварнă», тесе çырать «Хабар» хаçат. Совет Çарĕн кунне уявланă вăхăтра Иран халăхĕ Совет Союзĕнчи халăхсемпе — Совет Çарĕ ирĕке кăларнă халăхсемпе—хăйсен пуканелле правительствисенчен тата фашистла пусмăртан хăтăлнă халăхсемпе пĕрле хавасланать, Иран халăхĕпе Совет Союзĕнчи халăхсен туслăхне малалла çирĕплетсе пырас ĕçре ырă сунать».

Совет воинĕсен памятникĕсем умне чечек кăшăлĕсем хунă

РУМЫНИ

БУХАРЕСТ, февралĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Паян ирхине Бухарестри ĕççыннисем Совет Çарĕн Румынине фашистла пусмăртан хăтарассишĕн кĕрешсе вилнĕ воинĕсен памятникĕ патне пухăннă. Унта чаплă пуху пулса иртнĕ, памятник умне чечек кăшăлĕсем хунă.

Румынин хĕçпăшаллă вăйĕсен министрĕн заместителĕ, Румынири рабочи партин Центральнăй Комитечĕн членĕ В. Судер генерал-майор сăмах тухса каланă. Вăл Румыни халăхĕ ячĕпе совет воинĕсем Румынири ĕççыннисене ирĕклĕ те телейлĕ пурнăç тума май панăшăн Совет Çарне, совет халăхне тата аслă Сталина чунтан-чĕререн тав тунă. Совет Çарĕ ирĕке кăларассишĕн кĕрешсе пархатарлă ĕç тунине палăртса, вăл совет воинĕсен паттăрла ĕçĕсене Румыни халăхĕ нихçан та манас çук, тенĕ.

Хурлăхлă кĕвĕсен сасси янăранă вăхăтра памятник умне Нацин Аслă Пухăвĕн Президиумĕ ячĕпе, Министрсен Совечĕ, Румынири рабочи партин Центральнăй Комитечĕ, Румынири хĕçпăшаллă вăйсем, Пĕтĕм çĕршыври ĕççыннисен конфедерацийĕ, Румынипе ССР Союзĕпе тытакан çыхăнăва çирĕплетес тĕлĕшпе ĕçлекен обществин генеральнăй совечĕ ячĕпе, çавăн пекех Румынири ытти нумай обществăллă организацисем ячĕпе чечек кăшăлĕсем хунă.

Чечек çыххисем хунă хыççăн памятник умĕнче çар оркестрĕпе Румыни çар чаçĕсен чаплă маршĕ пулнă, Румынине ирĕке кăларассишĕн паттăр кĕрешсе вилнĕ совет воинĕсене чысласа хисепленĕ.

Паян Бухарест облаçĕнчи Пиперы тата Жилава поселоксенче те совет воинĕсен вилтăприсем çине чечек кăшăлĕсем хунă, çав ятпа чаплă пухусем пулса иртнĕ.

ГЕРМАНИ РЕСПУБЛИКИ

БЕРЛИН, февралĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Паян ирхинĕ Берлинра, Трептов паркĕнче чаплă пуху пулнă. Унта пухăннисем Берлиншăн çапăçнă чухне вилнĕ совет воинĕсен памятникĕ умне чечек кăшăлĕсем хунă.

Памятник патĕнче пулнă митингра Германири социалистсен пĕрлĕхлĕ партийĕн Центральнăй Комитечĕн секретариат членĕ Вилли Штоф тата Фрип Бурмейстер министр сăмах тухса каланă. Вĕсем пĕтĕм нимĕç халăхĕ ячĕпе Совет Çарне Германие гитлерла фашизмран хăтарнăшăн чунтан-чĕререн тав тунă.

НОРВЕГИ

ОСЛО, февралĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Осло хулинчи «Вестре-Гравлунд» текен масар çинче—хулан тĕп масарĕ çинче чаплă пуху пулнă. Пухăва пынисем Норвегие ирĕке кăларассишĕн çапăçнă чухне вилнĕ совет воинĕсен вилтăпри çине гранитран туса лартнă монумент умне чечек кăшăлĕсем хунă.

Чечек кăшăлĕсем хунă вăхăтра Норвегин прогрессивнăй общественноçĕн представителĕсем сăмах тухса каланă. Вĕсем совет халăхĕ Норвегие нимĕç оккупанчĕсенчен хăтарассишĕн кĕрешнĕ çĕрте тӳсĕмпе сухатусене тата çапăçура вилнĕ совет воинĕсене нихçан та манас çук, тенĕ.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, февралĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтерне: Корея Халăх çарĕн соединенийĕсем Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсемпе пĕрле паян фронтăн уйрăм участокĕсенче Америкăпа Англи интервенчĕсене тата Ли Сын Ман çарĕсене хирĕç оборонăра тăрса çапăçнă, тăшман салтакĕсемпе офицерĕсене тата техникине чылай пĕтернĕ.

Паян Халăх çарĕн зенитнăй чаçĕсем тата самолетсене хирĕç çапăçакан салтакĕсем тăшманăн 2 самолетне персе ӳкернĕ, çав самолетсем унччен, ытти самолетсемпе пĕрле, Вонсан, Нампхо тата Сукчхонь районĕсенчи мирлĕ хуласемпе ялсем çине бомбăсем пăрахнă тата пулеметсемпе пенĕ пулнă.

ПХЕНЬЯН, февралĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтерне:

Корея Халăх çарĕн соединенийĕсем Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсемпе пĕрле пур фронтсенче те тăшмана хирĕç оборонăра тăрса çапăçнă.

Хĕвеланăçĕнчипе вăтаçĕрти фронтсенче тăшман февралĕн 23-мĕшĕпе 24-мĕшĕнче, авиаци, танксем тата артиллери пулăшнипе, хăшпĕр участоксенче вунă хут ытла атакăсем тума хăтланнă, вĕсене пурне те сирсе янă.

Ĕнер Халăх çарĕн чаçĕсем хĕвелтухăçĕнчи çыран çывăхĕнче, Килчу патĕнче, тăшманăн пĕр эсминецне, пĕр торпеднăй катерне шыва путарнă. Тăшманăн темиçе карапне сиен кӳнĕ. Çав карапсем унччен çыран тăрăхĕнчи хуласемпе ялсем çине тупăсемпе пенĕ пулнă.

Паян тăшман самолечĕсем Вонсан, Нампхо тата Сукчхонь районĕсене тапăннă. Халăх çарĕн зенитнăй артиллери чаçĕсем тăшманăн икĕ самолетне персе ӳкернĕ, тепĕр самолетне сиенленĕ.

Америка çарĕсем Корейăра бактериллĕ хĕçпăшалпа усă курни çинчен Синьхуа агентстви пĕлтерни

ПЕКИН. февралĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ Корейăри фронтран çакăн çинчен пĕлтерне:

Америка самолечĕсем Корея территорине чума, холера тата ытти чир-чĕр ертнĕ хурт-кăпшанкăсене илсе пырса пăрахаççĕ Америка самолечĕсем январĕн 28-мĕшĕпе февралĕн 17-мĕшĕ хушшинче фронтран инçетри районсене кăна мар, фронт тăнă çĕре те вĕлерекен чир-чĕр ертнĕ хурт-кăпшанкăсем илсе пырса янă. Америка самолечĕсем Ичхонь, Чхолвонь, Саньяни, Пхенган, Кымхва патне тата Пукханьган юханшывĕнчен хĕвелтухăçнерехри вырăна чир-чĕрлĕ хурт-кăпшанкăсене илсе пырса пăрахнă.

Корея Халăх çарĕн врачĕсем: чумапа холера, бациллисемлĕ хура шăнасене, сикекен пăрçасене, сăвăссене тата пысăк шăнасене американецсем мирлĕ халăх хушшинче тата Корея Халăх çарĕпе Китай халăх добровольцĕсен çар çыннисем хушшинче чир-чĕр сарас шутпа пăрахнă, теççĕ.

Америка интервенчĕсен çĕнĕ тискерлĕхне хирĕç Корея халăхĕ протестлет

ПХЕНЬЯН, февралĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Корея тĕп телеграф агентстви Америка интервенчĕсен çĕнĕ тискерлĕхĕ çинчен пĕлтернине Корейăри пур хаçатсем те пичетленĕ. Çав пĕлтерӳре американецсем Корея халăхне чирлеттерекен бактерисем сарнипе йышлăн вĕлерсе пĕтерме хăтланни çинчен каланă.

Н-ски фронтран илнĕ пĕлтерӳре каланă тăрăх, Америка интервенчĕсем фронтра Корея Халăх çарĕпе Китай халăх добровольцĕсем вăйлă çапнипе поражени тӳснĕ пирки хытă тарăхнă. Кун хыççăн Америка интервенчĕсем январь уйăхĕн вĕçĕнче Ичхоньрен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри Нонсолон, Енсудон тата Кыогори ялĕсем таврашне бактери ертнĕ хурт-кăпшанкăсене пăрахрĕç. Америка самолечĕсем Ичхонь, Чхольвонь, Кимсой, Пхенган патĕнче тата ытти вырăнсенче, вуншар хут вĕççе çаврăнса, чума, холера тата ытти усал чирсен бактерийĕсене ертнĕ сикекен пăрçасем, пыйтăсем, кăткăсем тата ытти хурт-кăпшанкăсем пăрахса çӳренĕ. Америка влаçĕсен çак çĕнĕ тискерлĕхĕ интервентсен питĕ киревсĕр шухăшне, вĕсем Корея халăхне пĕтĕмпех вĕлерсе пĕтерме тăрăшнине тăрă шыв çине кăларать. Пĕлтерӳре малалла çапла каланă: Америка интервенчĕсем хăйсен çĕнĕ тискер ĕçĕсене перемири çинчен каласусем пынă вăхăтра турĕç, çакăнтан американецсем мир тăвасшăн мар пулни, вĕсем юп тăкăнакан агрессиллĕ вăрçа тата анлăрах сарма тăрăшни курăнать.

ФРАНЦУЗСЕН ПИСАТЕЛĔ ПОЛЬ ЭЛЮАР МУСКАВА КИЛНĔ

Февралĕн 24-мĕшĕнче французсен паллă писателĕ Поль Элюар Мускава килсе çитнĕ. Вăл Виктор Гюго çуралнăранпа 150 çул тултарнă ятпа пулмалли уява килнĕ (ТАСС).

Германири социалистсен пĕрлĕхлĕ партийĕн Центральнăй Комитечĕн VIII-мĕш пленумĕ

БЕРЛИН, февралĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). 1952 çулхи февралĕн 21-мĕшĕпе 23-мĕшĕнче Германири социалистла пĕрлĕхлĕ партин Центральнăй Комитечĕн VIII-мĕш пленумĕ пулса иртнĕ. Пленума Вильгельм Пикпа Отто Гротеволь председатель пулса ертсе пынă. Германири социалистла пĕрлĕхлĕ партин Центральнăй Комитечĕн «Нейес Дейчланд» хаçатĕнче паян пленум çинчен пĕлтерни пичетленсе тухнă.

Пĕлтерӳре Вальтер Ульбрихт тунă доклад çинчен—«Партин идеологиллĕ, политикăллă, организациллĕ ĕçĕсем тата партин иккĕмĕш конференцине хатĕрленесси çинчен» тĕплĕ çырнă. Вальтер Ульбрихт доклачĕ тăрăх пулнă прениссенче партипе государствăн ертсе пыракан органĕсен ĕçĕсемпе интеллигенци хушшинче ĕçлессипе, Демократиллĕ Германи Республикин ялхуçалăхне тата культурине аталантарас ĕçсемпе çыхăннă ыйтусем çинчен сӳтсе явнă.

Пĕлтерӳре çапла каланă: «Центральнăй Комитет Германири социалистсен пĕрлĕхлĕ партийĕн Центральнăй Комитечĕн генеральнăй секретарĕ тунă доклада тата унăн юлашки сăмахне ырларĕ, вĕсене партин ертсе пыракан органĕсен март уйăхĕнче пуçланакан суйлавĕсене иртерес ĕçре никĕс хума йышăнчĕ.

Центральнăй Комитет «Критикăпа самокритика тата партин, массăллă организацисен, государство управленийĕсен ертсе пыракан органĕсен ĕçĕсене лайăхлатасси çинчен резолюци», çавăн пекех «Партин иккĕмĕш конференцине делегатсем суйласси тата 1952 çулта партин ертсе пыракан органĕсен çĕнĕ суйлавĕсене, партин вырăнти пуçламăш организацисенчен пуçласа партин провинцисенчи (çĕрсенчи) правленийĕсем таранах, иртересси çинчен памалли кăтартăва» йышăнчĕ».

Пĕлтерӳре юлашкинчен Германири социалистсен пĕрлĕхлĕ партийĕн Центральнăй Комитечĕ нимĕçсен аслă композиторĕ Бетховен вилнĕренпе 125 çул тултарнине асăнса иртерес пирки резолюци йышăнни çинчен, çавăн пекех халиччен Центральнăй Комитет членĕн кандидачĕсем пулнă Карл Мевиспа Эрих Вирта Центральнăй Комитет членне кĕртни çинчен каланă.

Англипе Китай туслăхĕ обществин Лондонри уйрăмĕн конференцийĕнче

ЛОНДОН, февралĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Февралĕн 23-мĕшĕнче Бивер-Холра (Лондон) Англипе Китай туслăхĕ обществин Лондонри уйрăмĕ организациленĕ конференци пулса иртнĕ.

Конференцие рабочисен организацийĕсемпе прогрессивнăй организацисенчен 130 делегат пынă, вĕсене суйласа янă организацисенче пĕтĕмпе 200 пин çын тăрать. Çавăн пекех конференцире 120 хăна пулнă.

Конференцие парламент членĕ Джоффри Бинг уçнă. Вăл Китай Халăх Республикипе туслă çыхăну тытма кирлине уйрăмах палăртнă. Пир-авăр тĕртекенсен пĕрлештернĕ профсоюзĕн Бернлири (Ланкашир) уйрăмĕн генеральнăй секретарĕ Гарольд Ликсон хăйĕн сăмахĕнче вĕсен профсоюзĕ Англипе Китай пĕр-пĕрин хушшинче суту-илӳ ĕçне вăйлатассипе хытă интересленет, çака Ланкаширти пир-авăр промышленноçĕнче çынсем ĕççĕр тăрса юлассине пĕтерме пулăшĕччĕ, тенĕ.

Ун хыççăн тепĕр 20 делегата ахăн тухса каланă. Ораторсем мире тĕреклетме, Англипе Китай хушшинчи суту-илĕве вăйлатма кирли çинчен каланă. Китайпа çыхăнса суту-илӳ туни Англие экономика кризисĕнчен хăтăлма тата ĕççĕр тăрса юлнисен йышĕ ӳссе пырассине нумай суллăха чарса лартма пулăшать, тенĕ вĕсем.

Конференцие пухăннисем пĕр шухăшлă пулса резолюци йышăннă. Унта вĕсем Англи правительствине Корейăри мирлĕ каласусене ăнăçлă вĕçлеме пĕр тăхтаса тăмасăрах пур майсемпе те тăрăшма чĕннĕ. Унта правительствăн хăй тĕллĕнех Англи çарĕсене хăвăртрах Корейăран илсе тухас пирки çине тăмалла, тенĕ. Правительствăн, тенĕ резолюцире, Америкăн Китая хирĕç вăрçă пуçламалли планĕсемпе хăй килĕшменни çинчен пĕлтермелле, Тайвань утравне халех Китай Халăх Республикине пама ыйтмалла; «Японипе тунă мирлĕ договор» текенскерне хӳтĕлеме пăрахас пулать тата Японие хĕçпăшаллантарас ĕçе чарса лартма тăрăшмалла; Китай Пĕрлешнĕ нацисен организацийĕн органĕсенче вырăн пама ыйтнине—çак питех те тĕрĕс требование тивĕçтерес тĕлĕшпе пур майсемпе те тата ыра кăмалпа пулăшса пымалла, пĕтĕм тĕнчере çирĕп мир тăвас пирки каласусем пуçламалла: Англипе Китай хушшинчи суту-илĕве вăйлатасси çинчен Китайпа халех каласусем пуçламалла.

Конференцире, пурте пĕр шухăшлă пулса, Англипе Китай туслăхĕ çинчен декларацие йышăннă. Ăна Лондонра пурăнакансем ячĕпе Пекинри халăха ярса параççĕ.

Гоминдан çарĕсем Китая тапăнса кĕме хатĕрленни çинчен Бирма хаçачĕсем пĕлтерни

РАНГУН, февралĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Рангунри «Нейшн» хаçат ĕнер хăйĕн корреспонденчĕ пĕлтернĕ хыпара пичетленĕ. Вăл Çурçĕр Бирмăн гоминдановецсем йышăннă районĕсенче пулса килнĕ. Унта çапла каланă:

Кенгтунгăн 12.400 тăваткăл миля анлăшĕ территорийĕнче гоминдановецсем пур хуласемпе ялсене те контроллесе тăраççĕ. Унти халăхран укса, пурлăх пухаççĕ. Çавна пула Бирма государствин вырăнти администрацийĕ иртнĕ çулта халăхран пухмалли налогăн 40 процентне çеç пухма пултарнă, кăçал вара 25 процентран ытла пухаймĕç. Кенгтунгра гоминдановецсем пĕтĕмпе 13 пин çын. Вĕсенчен йĕркеллĕ çарăн салтакĕсемпе офицерĕсем—8 пин çын, ытти 5 пин çынни—уйрăм отрядсенче тăракан çынсем. Йĕркеллĕ çар чаçĕсене хăвăрт пемелли, юлашки вăхăтра шухăшласа кăларнă автоматсемпе хĕçпăшаллантарнă. Монгсатра гоминдановецсен хăйсен аэродромĕ пур. Унта нумай пулмасть Тайван утравĕ çинчен 900 салтак илсе пынă. Гоминдановецсене пурне те лайăх тумлантарнă, вĕсен хĕçпăшалсемпе боеприпассем нумай. Вĕсем кашни кунах çар ĕçне вĕренеççĕ, пăшалтан тĕл пеме вĕренмелли занятисем тата маневрсем иртереççĕ.

Гоминдан офицерĕсем хаçат корреспондентне хăйсем Китайăн Юньнань провинцине тапăнса кĕме тимлĕ хатĕрленни çинчен уççăнах каласа панă. Гоминдановецсем хушшинче корреспондент çар тумтирĕ тăхăннă икĕ американеца курнă.

Пĕлтерӳре малалла çапла каланă: гоминдановецсен хĕçпăшалсемпе боеприпассем нумай пулсан, вĕсене Кенгтунга Таиланд правительстви килĕшнипе тата пулăшнипе кăна илсе пыма пултарнă. Гоминдановецсем Таиландран пир-авăр, тавар тата ытти таварсем илсе тăраççĕ, унта вара опиум илсе кайса сутаççĕ. Икĕ хутчен гоминдановецсене Бирма укçине—пĕтĕмпе 350 пин рупий илсе пырса панă.

Хăйĕн корреспонденчĕ пĕлтерни çинчен çырса, «Нейшн» хаçат уйстатьяра гоминдановецсем Бирма территорийĕнче пурăнни тата çар ĕçĕсене туса пыни Бирмăшăн хăрушлăх туса хунине палăртать.

Америка империалисчĕсем хушнипе

БЕРЛИН, февралĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Германи Республикин правительстви мирлĕ договор тăвас ĕçе васкатас пирки чĕнсе каланипе тата Совет правительстви çав чĕнӳпе килĕшни çинчен пĕлтернине Демократиллĕ Германи Республикинчипе Хĕвеланăç Германири халăхăн анлă массисем ырласа йышăннă.

Демократиллĕ Германи Республикин чĕнĕвĕ пирки Бонри правительство нумай вăхăт хушши нимĕн те шарламан хыççăн, халĕ вара çав чĕнӳ пирки хăйĕн шухăшне пĕлтерне.

Февралĕн 22-мĕшĕнче Бонра пулнă пресс-конференцире Хĕвеланăç Германи правительствин представителĕ çав правительство ятарласа çырнă коммюникене вуласа панă. Демократиллĕ Германи Республикин правительстви тăватă держава правительствисене чĕнсе каланинче кăларса тăратнă сăлтавсем пĕтĕмпех нимĕç халăхĕн интересĕсене палăртаççĕ. Çав сăлтавсене пула Бонри правительствăн маневрсем тума тивнĕ. Бонри правительство хăй мирлĕ договор тăвассишĕн тăнă пек кăтартма хăтланнă. Чăннипе вара Бонри правительство мирлĕ договор тутарассине тата Германи пĕрлĕхне çĕнĕрен тăвассине васкатас ĕçсене пурнăçлама килĕшмест.

Виктор Гюгона асăнса

ПАРИЖ, февралĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Виктор Гюго тусĕсен обществи тата Миршĕн тăракансен Нациллĕ Совечĕ чĕннипе ĕнер Францин аслă писатель-демократĕ Виктор Гюго çуралнăранпа 150 çул тултарнă май ăна хисеплесе асăнма, унăн вилтăпри çине чечек кăшăлĕсем хума Пантеона Парижри темиçе çĕр çын пухăннă.

Çав чаплă пухăва Миршĕн тăракансен Нациллĕ Совечĕн ялайхи комиссийĕн, Сена департаментĕнчи Мир Совечĕн, писательсен Нациллĕ комитечĕн тата ытти обществăллă тата демократиллĕ организацисен представителĕсем пынă.

Виктор Гюго пурнăçĕпе творчестви çинчен Фернан Грег писатель кĕске сăмах каланă. Митинга пухăннисем Виктор Гюго вилтăпри çине чечек кăшăлĕсем хунă.

Спорт хыпарĕсем

Эстафета вĕçленчĕ

Досаафăн республикăри оргкомитечĕ Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 34 çул тултарнă ятпа йĕлтĕрçĕсен эстафетăллă чупăвне иртерчĕ. Унта республикăри пур районсенчи йĕлтĕрçĕсем те активлă хутшăнчĕç. Эстафетăллă чупу вăхăтĕнче йĕлтĕрçĕсем чылай колхозсенче пулса Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ, вĕсен организаторĕсем В. И. Ленинпа И. В. Сталин çинчен, йĕлтĕр спорчĕ çинчен лекцисемпе докладсем, каласусем иртерне, Совет Çарĕн кунне уявлама хатĕрленме пулăшнă.

Февралĕн 23-мĕшĕнче, Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 34 çул тултарнă кун эстафета вĕçленчĕ. Шупашкар, Сĕнтĕрвăрри, Çĕрпӳ, Сĕнтĕр районĕсенчи йĕлтĕрçĕсен командисем шăп 6 сехетре Шупашкарти Хĕрлĕ площаде çитрĕç, эстафета мĕнле иртни çинчен Досаафăн республикăри оргкомитечĕн председательне Трофимов юлташа рапортсем пачĕç.

— Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 34 çул тултарнă кун ячĕпе иртерне эстафета пирĕн çамрăксем йĕлтĕр спортне хытă юратнине кăтартса пачĕ,—терĕ Трофимов юлташ команда капитанĕсен рапорчĕсене илтсе пĕтерсен. Вăл эстафета участникĕсене саламларĕ, йĕлтĕр спортне анлăрах сарас тата Досааф организацийĕсен ĕçне вăйлатас тĕлĕшпе паха çитĕнӳсем тума сунчĕ.

Эстафета участникĕсен ячĕпе Сухачев юлташ ответлă сăмах каларĕ.

Эстафета участникĕсем каçхине Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 34 çул тултарнă ятпа иртерне чаплă парура пулчĕç.

Йĕлтĕр спорчĕпе республикăра мала тухассишĕн

Иртнĕ вырсарникун Атăл леш енче физкультурниксемшĕн пысăк уяв пулчĕ. Унта йĕлтĕр спорчĕпе республикăра мала тухассишĕн ăмăрту пуçланчĕ.

Ăмăрту умĕн физкультурниксен парачĕ пулчĕ. Ăмăрту ялавне иртнĕ çулхи ăмăртура мала тухнă Бурашников, Михайлов, Краснослова спортсменсем çĕклерĕç.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи физкультурăпа спорт комитечĕн председателĕ К. Никишев юлташ ăмăрту участникĕсене Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 34 çул тултарнă ятпа саламларĕ, ăмăртура çитĕнӳсем тума сунчĕ.

Хĕрачасемпе хĕрарăмсем 3—5 километра, арçынсем 18 километра ăмăртса чупрĕç.

Ялсемпе хуласенчен, тĕрлĕ спорт обществисенчен килнĕ кашни йĕлтĕрçĕ ăмăртура лайăх результатсем кăтартма тăрăшрĕ. Сантаçăк япăх тăнă пулсан та физкультурниксем çитĕнӳсем турĕç.

Ăмăртăван малтанхи кунĕнче арçынсенчен 18 километра ăмăртса чупса М Михайлов («Искра» спорт обществи) мала тухрĕ. Унăн вăхăчĕ—1 сехет те 19 минут та 55 секунд.

Хĕрарăмсенчен, 5 километра чупса, «Искра» спорт обществи членĕ Вилюнова юлташ мала тухрĕ.

Ăмăртура çавăн пекех Вишневский (Шупашкар), Петров (Йĕпреç), Алексеев (Кăчаш) лайăх тĕслĕхсем кăтартрĕç.

Йĕлтĕрçĕсем трамплин çинчен сикес енĕпе те ăмăртрĕç.

Арçынсенчен 18-шар метр икĕ хут сиксе Яковлев («Динамо») пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ.

Абакумов («Динамо»), Морозов («Молния») спортсменсем иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене йышăнчĕ.

Çамрăксенчен Казанаев («Спартак») тата Яшин («Молния») йĕлтĕрçĕсем мала тухрĕç.

Февралĕн 25-мĕшĕнче йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвĕ малалла пычĕ.

Колхозниксем радио кĕртеççĕ

ЕТĔРНЕ. Тимирязев ячĕпе тăракан колхозра колхозниксен килĕсене радио кĕртес ĕç аван пырать. Çак кунсенче 40 колхозник килне радио кĕртнĕ. Халĕ колхозниксем Мускавран, Шупашкартан тата ытти хуласенчен пулакан передачăсене юратса итлеççĕ.

Радио кĕртес текенсем татах та нумай.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЧĂВАШ ГОСУДАРСТВО АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ

Паян, февралĕн 26-мĕшĕнче, каçхине чăвашла спектакль

«ПУРНĂÇА ЮРАТСА»

(Юлиус Фучик)

Ыран, февралĕн 27-мĕшĕнче, каçхине чăвашла спектакль

«РЕВИЗОР»

Спектакльсем 20 сехетре пуçланаççĕ.

„Родина" кинотеатрта

Паян, февралĕн 26-мĕшĕнче,

„БЛИЗНЕЦЫ"

Сеанссем 12, 14, 16, 18.15, 20, 22 сехетре пуçланаççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ. ответлă редактор—0-67, ответлă редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-64, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—4-17, ялхуçалăх пайĕ—3-97, пропаганда пайĕ—8-61, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство канцурĕ—0-23.

НТ 00332 Типография № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.